# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

30 (9065) № * Эрнекун, 2023 çулхи август (çурла) уйăхĕн 4-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Вырма – 2023**

## Уйра пилĕк комбайн тырă вырать



*Суворов яч. хис. хуçалăхĕн çĕрĕсем Муркаш тăрăхĕнче кăна мар, Етĕрне округĕнче те анлăн сарăлса выртаççĕ, малалла ку енĕпе ытларах ĕçлесшĕн вĕсем. Кĕрхи культура кăна хуçалăхра 1500 гектар йышăнать, икĕ округра çурмашар лаптăк. Тăван тăрăхра çурхи культурăпа кĕрхи культура пĕрле 1230 гектар чухлĕ. Вырма лаптăкĕ пĕчĕк марри хуçалăха пачах та хăратмасть, пилĕк комбайншăн вăл йывăрлăх мар. Вырма ĕçĕ валли техника таврашĕ çителĕклĕ, ĕç условийĕсем лайăх, вăл шутра шалу тӳлесси те.*

*Августăн 2-мĕшĕ тĕлне округри мĕн пур формăллă хуçалăхсем кĕрхи тулăна 846 га çинче вырнă, вăл шутра 500 га Суворов яч. хис. хуçалăхра. Малтанласа палăртнă тăрăх, вĕсем 2 пин тонна тĕш тырă йĕтем çине кĕртнĕ. Пĕр гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 40 ц танлашать.*

*Сăн ӳкерчĕкре вырмара тăрăшакан ушкăна куратăр, вĕсем: Р. Кузнецов, Ф. Журавлев, С. Сорокин, А. Лопатин, А. Архипов.*

*(Вĕçĕ 3-мĕш страницăра).*

**Йыхрав**

## Пыл уявне чĕнетпĕр

**Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн культура пайĕ çĕнсе илнĕ грантпа пирĕн енре «Сывлăх пыл хурчĕн çунаттисем çинче» ятпа республика шайĕнчи Пыл уявĕ ирттересси ырă йăлана кĕчĕ.**

**Пыл хурчĕ тытасси – ответлă ĕç. Ку ĕçе чунĕпе парăннă çын Турă кайăкĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни укçа-тенкĕпе пĕрлех сывлăх та парать.**

**Кăçал та муркашсем ку йăлана манăçа хăварас темерĕç. Çапла вара асăннă уяв округра çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче 14-мĕш хут хурт-хăмăрçăсене, пыл продукцине юратакансене пĕр йыша пуçтарĕ. Ăна çӳллĕ шайра йĕркелесе ирттерме çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов ертсе пычĕ.**

**Ларура уява ирттерес йĕркене, вĕсемшĕн яваплисене çирĕплетессине, халăха явăçтарассине, хăрушсăрлăх йĕркине пăхса тухрĕç.**

**Хурт-хăмăр ĕрчетессипе муркашсем ыттисемшĕн тĕслĕхре пулнине çулсерен хамăр куçпа курса пыратпăр.**

**Кăçалхи Пыл уявĕнче утарçăсемпе тĕл пулса калаçасси, вĕсен ырă опытне алла илесси, утарçăсен пылне хакласси, шкул ярмаккипе тата артистсен пултарулăхĕпе паллашасси тĕп вырăнта пулĕ.**

**Хамăр вулавçăсене уяв йĕркипе хаçатăн çитес номерĕнче тĕплĕнрех паллаштарăпăр.**

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Ĕç çи**

## Вырма сарăлса пырать

Муркаш округ администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, августăн 2-мĕшĕ тĕлне, мĕнпур формаллă хуçалăхсем 3980 га çинче нумай çул ӳсекен курăк çулнă, 4843 т ута хатĕрленĕ. Ильич яч. хис. хуç., Суворов яч. хис. хуç., «Оринино» хуçалăхра ку енĕпе ытларах ĕçленĕ.

Пĕтĕмпе хуçалăхсем 21650 т сенаж хатĕрленĕ, «Ударник», Суворов яч. хис. хуç., «Свобода» хуçалăхра ытларах тăрăшнă.

Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Ильич яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсем, «Герой» хуçалăх тата А. Пихтеров хресчен (фермер) хуçалăхĕ вырмана маларах тухнă. Ĕçсем кĕрхи тулă пуссинче пыраççĕ, вырма ытти хуçалăхра та сарăлса пырать.

Малтанласа палăртнă тăрăх, пĕр га пуçне тивекен вăтам тухăç – 36,5 ц. Суворовсен чи пысăкки – 40 ц, Ильич яч. хис хуçалăхра – 36,7, ыттисен – 30-шар ц.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**




**Сасăлав**

## Муркаш юманĕ – Раççей йывăçĕ

***Çĕршыври чи лайăх йывăçа палăртассипе «Российское дерево года – 2023» наци конкурсĕн сасăлавĕ вĕçленнĕ. Конкурс кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчен пытăнса августăн 1-мĕшĕччен пынă. 21577 сасă пухса «Чăвашсен чи ватă юманĕ» конкурс çĕнтерӳçи пулса тăнă.***

«Конкурсра çĕнтерни пирĕн республикăн экологипе туризм илĕртӳлĕхне татах ӳстерĕ. Юманпа вара Чăваш Ен хăнисем ытларах интересленме тытăнĕç. Сасăлава хутшăннисене пурне те тав сăмахĕ калатăп. Пĕрле эпир – вăй!» – палăртнă Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев хăйĕн Телеграм-каналĕнче.

Чăвашсен чи ватă юманĕ 372 çулта, унăн çӳллĕшĕ 20 метр ытла, диаметрĕ вара 2 метра яхăн. Юман Чăваш Ен Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин «Опытное лесничество» хысна учрежденийĕн Ильинка участок лесничествин территорийĕнче ӳсет.

Чăваш Енре çут çанталăк объекчĕсене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Наци культуринче юман пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Юмана ӳкерни пирĕн республика гербĕпе ялавĕ çинче те пур.

19-мĕш ĕмĕрте асăннă юман ученăйăн тата вăрманçăн Б.И. Гузовскийăн сăнав тĕслĕхĕсен шутĕнче пулнă. Юман халĕ те пурăнать, çуллен çулçă сарать, йĕкел тăвать.

Конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн Муркаш округĕнчи Ильинка участок лесничествин территорийĕнчи 372 çулхи çĕнтерӳçĕ юман патĕнче «Российское дерево года» асăну хăми вырнаçтараççĕ. Ку вăл Чăваш Енре пурăнакансемшĕн хăпартлану символĕ тата туристсене илĕртмелли объект пулса тăрĕ.

Кунсăр пуçне йĕркелӳ комитечĕн представителĕсем пирĕн республикăна çĕнтерӳçĕ Дипломне тата Сертификат параççĕ. Йывăçсен экспертизин «Здоровый лес» центрĕн ETW-специалисчĕсем йывăçа тĕпчеççĕ тата сывату мероприятийĕсем туса ирттереççĕ.

«Чăваш Енре пурăнакансем активлă пулнипе тата пĕрле тăрăшнипе эпир республикăна татах тепĕр тивĕçлĕ çĕнтерӳ парнелеме пултартăмăр. Йывăç 21 пин ытла сасă пухма пултарчĕ. Пĕрле эпир татах пысăкрах çитĕнӳсем тума пултарăпăр. Асăннă конкурсра çĕнтерни туристсемшĕн пирĕн регион илĕртӳлĕхне татах ӳстерессе шанса тăратăп», – тенĕ Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Эмир Бедертдинов.

Кĕске справка. «Российское дерево года» наци конкурсне 2017 çултанпа ирттереççĕ. 2023 çулхи конкурса 69 номинант хутшăннă.

2012 çулта «Чăвашсен чи ватă юманне» Раççейри ватă йывăçсен наци реестрне кĕртнĕ, ăна пĕтĕм Раççейри «Дерево – памятник живой природы» статус панă. Юман асăннă конкурсра 2020 çулта иккĕмĕш вырăн йышăннă.

**Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви.**

Паянхи кун ыйтăвĕпе

# Хамăра хамăр ĕçпе тивĕçтерме пулать

**Юлашки вăхăтра харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен (самозанятый) пирки тĕрлĕ шайра калаçу сахал мар. Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленни пĕчĕк тупăшлă çемьесемшĕн те, уйрăмах тата килти хуçалăхра ĕне, ытти выльăх тытса усракан ял çыннишĕн те усăллă иккен. Кун пеккисем патшалăх пулăшăвне – субсидие тивĕçейреççĕ. Пулăшу мелĕсене Раççей шайĕнчисене те, республика шайĕнчисене те пăхса хунă.**

**Çав вăхăтрах вара тепĕр майлă шухăшлисем те çук мар. Çак сĕнĕве хирĕçлекенсен аргуменчĕ – регистрациленесси ансат япала мар, отчетсем тăратма тивет, уйăхсерен налук тӳлемелле пулать, пулăшăвĕнчен ытларах расхучĕ кăна.**

**Ăçта-ха тĕрĕслĕх? Кама ĕненмелле? Килти хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх усракан ял çыннишĕн, пĕчĕк тупăшлă çемьешĕн чăннипех те пайталлă-и харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленни? Регистрациленессин йĕрки мĕнлерех тата? Налукне мĕн чухлĕ тӳлемелле пулĕ?**

**Çак ыйтусемпе интересленсе пăхрăм эпĕ. Хальхи вăхăтра вара, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнĕ пĕчĕк тупăшлă çемьесем округри социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă, килти хушма хуçалăх аталантаракансем вара Муркаш округ администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ урлă пулăшу мелĕсене тивĕçейреççĕ. Çавăнпа та вĕсен ертӳçисене калаçăва чĕнтĕм эпĕ.**






**Валентина АНИКИНА,**
**Чăваш Республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин «Социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центр» хысна учрежденийĕн округри социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ:**

– Малтанах регистрациленесси пирки. Çакă питĕ ансат. Онлайн мелĕпе патшалăх услугисен порталĕнче те, «Мой налог» приложенире те, налук инспекцийĕн сайтĕнче те, уполномоченнăй банк урлă та регистрациленме мелĕ.

Çавна палăртса хăварасшăн, **пирĕн пай урлă патшалăхăн пулăшу мелĕсене пĕчĕк тупăшлă çемьесем кăна тивĕçейреççĕ.** Кун пек çемьесен шутне çемьен пĕр членĕ пуçне тупăш виçи вăтамран республикăри пурăнма кирлĕ минимумран сахалрах тивекенсен лекеççĕ. Халĕ çак минимум виçине 12 пин те 363 тенкĕ шайĕнче çирĕплетнĕ.

Пĕчĕк тупăшлă çемье членĕн тупăшсене кăтартакан документсем тăратмалла пулать, социаллă контракт туса патшалăх пулăшăвне илме заявлени çырмалла. Маларах харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнĕ çын та çакăн пек заявлениех çырать. Заявление ведомствăсем хушшинчи комисси 8 ĕç кунĕ хушшинче пăхса тухса йышăну тăвать. Хыççăн вара эпир харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен шутланаканпа социаллă контракт çыратпăр. Кун пек социаллă контракт çырнисем кăçал 36 çын пулчĕ ĕнтĕ.

Кунта çакна та каласа хăварас пулать. Пĕчĕк тупăшлă çемье членĕсемпе социаллă контракт тăвассине икĕ йышшине пăхса хунă. Пĕрремĕшĕ вăл – **уйрăм предприниматель статусĕ илсе çынсене тĕрлĕ услугăпа тивĕçтересси** (кун пеккисем 16 çын пулнă), **иккĕмĕшĕ – килти хушма хуçалăха аталантарасси** (кун пеккисем 20 çын).

Уйрăм предприниматель статусĕ илнĕ çыннăн ĕçĕ-хĕлĕн енĕсем тĕрлĕ енлĕ пулма пултараççĕ. Акă кăçал кун пек пулăшу мелĕпе усă курнисем хушшинче автомашинăсен салонне хими мелĕпе тасатма кăмăл тунисем те, çĕвĕ изделийĕсем çĕлекен тата юсакан ателье уçакансем те, столяр изделийĕсем туса хатĕрлемелли цех уçакансем те, сасă çыравĕн студине йĕркелекенсем те, сĕтел-пукан туса кăларма пуçăнакансем те, алăк лартма тытăнакансем те, шалти отделка ĕçĕсене туса иртерме тытăнакансем те, парикмахер услугипе тивĕçтерекенсем те пулчĕç. Вĕсем пурте социаллă контрактра палăртнă хăйсен ĕçне йĕркелесе яма 350 пин тенкĕлĕх пĕр хут паракан патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ.

Пĕчĕк тупăшлисенчен тепĕр 20 çын социаллă контрактăн иккĕмĕш мелĕпе усă курса килти хушма хуçалăха аталантарма кăмăл турĕ. Кун пеккисене тивĕçтерекен пулăшу мелĕ – пĕр хут паракан укçа тӳлевĕ – 200 пин тенкĕпе танлашать. Ку укçа-тенкĕпе вĕсем вăрлăх та, тĕрлĕ техника хатĕрĕ те, выльăх та, килти хуçалăхра кирлĕ ял хуçалăх техники те туянма пултараççĕ. Пĕтĕмпех пулăшу укçи-тенкипе. Нимĕн те каялла тавăрса памалла мар. Мĕн кирлине туян, малалла пăхса ĕçле кăна.

Çавна та каласа хăварас пулать. Паллă ĕнтĕ, укçа-тенкĕне ăçталла килчĕ унталла сапалама, расхутлама памаççĕ. Çавна май уйрăм условисене пăхăнма тивет. Социаллă контракт туса патшалăх пулăшăвне тивĕçекенĕн икĕ çулран кая мар хăйĕн ĕçне пăрахмалла мар. Тепĕр услови – укçа-тенкĕпе тĕллевлĕ усă курнине çирĕплетекен документсем тăратмалла пулать. Ку ĕнтĕ вăл – социаллă контрактра палăртнă ĕçсене пурнăçлама кирлĕ оборудовани, техника хатĕрĕ т. ыт. те туяннине çирĕплетекен документсем.

Налук тӳлессин йĕрки питĕ ансат та уçăмлă. Ăна тӳлеме ниçта та кайса çӳремелле мар. Вăл налук инспекцийĕн сайтĕнчи харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенĕн кабинетĕнче е «Мой налог» приложенире хăй тĕллĕн йĕркеленет. Налука кашни уйăхра тӳлеме тивĕç. Унăн виçи илнĕ тупăшăн 4 процентĕпе танлашать. Калăпăр, уйăх хушшинче 10 пин тенкĕ тупăш илнĕ пулсан, налук 400 тенкĕ тӳлемелле пулать. Кашни уйăхри хăйĕн тупăш виçине вара хăйĕн ĕçне йĕркеленĕ çын хăй тĕллĕн палăртать. Тен хăш уйăхра тупăш пулмасан та пултарать. Кун пек чухне налук та тӳлемелле пулмасть.

Татах тепĕр пĕлтерĕшлĕ саманта та асăнса хăварас пулать. Хальхи вăхăтра ачаллă çемьесене пулăшмалли тĕрлĕрен пулăшу мелĕсене сахал мар пăхса хунă. Çемьери çул çитмен ачасемшĕн уйăхсерен пособи уйăрса параççĕ. Анчах та мăшăрсенчен пĕри те пулин официаллă ниçта та ĕçлемест пулсан, çемье ку пособисене тивĕçеймест. Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленни вара çын ĕçленине пĕлтерет, вăл налук тӳлет, апла пулсан çемьене тивĕçтерекен патшалăх пулăшăвĕн мелĕсем те сыхланса юлаççĕ.



**Татьяна ПАВЛОВА:**
**Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ:**

– Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнĕ ял çыннисем – килти хушма хуçалăха аталантаракансем валли хальхи вăхăтра пулăшу мелĕсем чăннипех те пĕчĕк мар. Юлашки вăхăтра ял çыннисенчен туянакан сĕт хакĕ пĕчĕкки чылайăшне пăшăрхантарать. Тĕрĕссипе вара харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленни сутлăх сĕт хакĕ пĕчĕккипе тӳсекен расхутсене пĕтĕмĕшпех тата ытлашшипех саплаштарма май парать. Çакă вăл килти хушма хуçалăхра выльăх усракансене субсиди уйăрса парса пулăшни пулса тăрать.

Субсиди уйăрса парассине икĕ енпе пăхса хунă. Пĕрремĕшĕ – **федераци механизмĕ.** Унпа килĕшӳллĕн сумалли 1 ĕне е пушмак пăру пăхса усранăшăн 5 пин те 500 тенкĕ, 2 ĕне тытса усранăшăн – кашниншĕн 6 пин те 500 тенкĕ, 3 тата ытларах ĕнешĕн – кашниншĕн 7 пин те 500 тенкĕ (пĕтĕмĕшле вара 50 пин тенкĕрен ытла мар) уйăрса параççĕ.

Кун пек пулăшупа ашлăх мăйракаллă шултра выльăх тытса усракансене кашни выльăхшăн 5 пин те 500 тенкĕпе (пĕтĕмĕшле 25 пин тенкĕрен ытла мар), пĕр çултан аслăрах сурăх тата качака тытса усракансене кашни пуçшăн 500 тенкĕпе (пĕтĕмĕшле 12 пин тенкĕрен ытла мар) тивĕçтереççĕ.

Ӳсен-тăран продукцийĕ туса илсе сутакансем валли те пулăшу мелĕсем пур. Субсидие усă çĕр çинче çĕр улми тата пахча çимĕç туса илсе сутакансем тивĕçейреççĕ. Вăл шутра купăста, кишĕр, кăшман, хăяр, помидор, сухан, ыхра акса-лартса тăвакансем. Субсиди виçи асăннă продукцие туса илме кайнă расхутсен 30 процентĕнчен иртме пултараймасть.

Иккĕмĕшĕ – хапăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнисене пулăшупа тивĕçтермелли **республика механизмĕ.** Ку вăл чи малтанах выльăх туянма кайнă расхутсене саплаштарассипе пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Калăпăр, ĕне туянма кайнă расхутсене 99,9 процент саплаштараççĕ, анчах та кашни ĕнешĕн 70 пин тенкĕрен ытла мар тата пĕтĕмпе 3 ĕнерен ытла мар. Пĕлтĕр вара 2 ĕне туяннăшăн кăна субсиди илме май пулнă.

Качака-сурăх туянакансенне те расхутсене 99,9 процент саплаштараççĕ, анчах та кашни пуçшăн 5 пин тенкĕрен ытла мар. Пĕтĕмĕшле вара 3 пуçран тытăнса 10 пуç таран качака-сурăх туяннăшăн субсиди уйăрса пама пăхнă. Иртнĕ çул кун пекки пулман.

Çавăн пекех ĕне пĕтĕлентерме кайнă расхутсене 90 процент таран республика саплаштарса парать. Ку та кăçалхи çĕнĕлĕх пулса тăрать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Олег Николаевăн йышăнăвĕпе килти хушма хуçалăха аталантаракансен – харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнисен выльăх туянма кăна мар, çавăн пекех хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕрен техника хатĕрĕ, минераллă удобрени, хурт-хăмăр ĕрчетмелли материалсем туяннăшăн та субсидие тивĕçме май пур. Тăпрана агрохими тĕпчевĕ ирттерме те, ял хуçалăх культурисен вăрлăхне лабораторирен тĕпчевĕ ирттерме те пулăшу мелĕсене пăхса хунă.

Пĕтĕмĕшле вара республика механизмĕпе тивĕçтерекен пулăшу виçи 500 пин тенкĕрен иртме пултараймасть.

Сăмахран, 2022 çулта пирĕн округра пурăнакансенчен харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнисем 37 ял çынни патшалăх пулăшăвне тивĕçрĕ. Пулăшу виçи пĕтĕмĕшле 2 млн тенкĕлĕхе яхăн пулчĕ. Кăçал çак вăхăта кун пеккисем 16 çын. Вĕсем пурте НПД (налог на профессиональный доход) 4 процент виçепе тӳлеççĕ.

Тепĕр çĕнĕлĕх те пур. 2023 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса субсиди илме заявкăпа документсене https://investchr.ru/ сайтра онлайн мелĕпе те пама пулать. Малтан патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче харпăр хăй кабинетĕнче авторизациленес пулать. Субсидипе Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви тивĕçтерет.

**Пĕтĕмлетсе калани**

*Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен (самозанятый) тесе регистрациленесси – çынсен хăйсен професси ĕçне усăмлă тумалли, пĕчĕк тупăшлă çемьесене тата ялта килти хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх тытса усракансене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтермелли лайăх мел.*

*Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленме питĕ ансат. Налук органне е банк офисне кайса çӳреме кирлĕ мар. Килтен тухмасăрах регистрациленме пулать.*

*Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнни кăна патшалăх пулăшăвне тивĕçессине пĕлтермест. Кун пеккисен заявкăпа тухас пулать. Пĕчĕк тупăшлă çемьесене пулăшу мелĕсемпе Чăваш Республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерстви урлă, ялта выльăх-чĕрлĕх тытса усракансене Ял хуçалăх министерстви урлă тивĕçтереççĕ.*

*Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе кирек кам та – официаллă ĕçлекен те, пенсионер та регистрациленме пултарать. Патшалăх служащийĕн кăна кун пек право çук.*

*Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен тесе регистрациленнисем професси ĕçĕ-хĕлĕнчен илнĕ тупăшшăн уйăхсерен налук тӳлеççĕ. Ставки – 4 процент. Тупăшне вара вĕсем харпăр хăй кăтартаççĕ.*

*Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх субсидине илнĕ пулсан, вăл хăйĕн професси ĕçне икĕ çулталăкран кая мар туса пыма тивĕç. Субсиди укçи-тенкипе тĕллевлĕ усă курнине çирĕплетекен документсем тăратма тивет.*

*Регистрациленсе харпăр хăй тĕллĕн ĕçлени пенсие тухма кирлĕ страховани стажĕн шутне кĕмест. Ку тапхăр страховани стажĕ шутне кĕтĕр тесен, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлекенĕн ятарлă счет çине взноссене хăйĕн тӳлесе тăмалла.*

**Владислав ШАПОШНИКОВ**
**хатĕрленĕ.**

Вырма – 2023

# Уйра пилĕк комбайн тырă вырать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Кăçалхи вырмара Муркаш муниципалитет округĕн уйхир ĕçченĕсен кĕрхи культурăна 4969 гектар çинчен вырса кĕртмелле. Пĕтĕмпе вара пĕрчĕллĕ культура 14925 гектар йышăнать. Хуçалăхсем çанталăк панипе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем кăçал Муркаш муниципалитет округĕнче вырмана пĕрремĕш тухрĕç.

Вĕсем хыççăн «Герой», Е. Андреев ячĕпе, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем, А. Пихтеров хресчен (фермер) хуçалăхĕ вырма ĕçне пуçăнчĕç. Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра 321 га, «Герой» хуçалăхра – 253 га, Ильич яч. хис. хуçалăхра 105 га кĕрхи культура вырмалла. Ĕç шавĕ ытти хуçалăхра та сарăлса пырать.

Тырă пуссинче пĕр харăсах пилĕк комбайн тырă вырнине курсан чун савăнать. Çакăн пек тухăçлă ĕçленине Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх уй-хирĕнче курма пулать. Вĕсен уй-хирĕнче эпĕ маларах, округ уй-хирне пăхса çаврăннă чухне те пулса курнăччĕ, уйсем таса, пысăк тухăç пулассине куçкĕретчĕ. Суворовсем тыр-пул ӳстересипе, çĕр ĕç технологине алла илессипе малти ретре пулни савăнтарать. Хуçалăх ертӳçи Алексей Воробьев çĕр ĕç технологине улăштарма палăртнине, пĕр çул çурхи культурăпа, тепĕр çул кĕрхи культурăпа ĕçлесшĕннине пĕлтернĕччĕ ун чухне.

Вырма пуçламăшĕнче 180 гектарлă уйра виçĕ комбайн ĕçленĕ пулсан, халĕ тырă пуссинче пилĕк «хир карапĕ» умлăн-хыçлăн пырать. Хыççăнах улăмне пухса кĕртессине те йĕркеленĕ. Вĕсем пĕр гектар пусне тивекен вăтам тухăç вăтăр центнертан кая пулмасса шанаççĕ.

Эпĕ шухăшланă тăрăх, ял хуçалăхĕнчи çĕнĕлĕхсене курас, тухăçлă ĕçленине пĕлес тесен шăпах та Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăха каймалла. Кашни кĕтесре хăтлăх пулни аванах курăнать: ферма картишне кĕретĕн-и, машинăпа трактор паркне çитетĕн-и, унта ĕçлекенсен кану



çуртĕнче пулатăн-и е тата йĕтем çине пыратăн-и – пур çĕрте те ĕç дисциплинипе çирĕп аталану палăрать.

Акă кунти черетлĕ çĕнĕлĕх – АТМ-34 тырă типĕтмелли оборудовани. Ăна 6,1 миллион тенкĕпе туяннă. Эпĕ йĕтем çине çитнĕ чухне таврана çĕнĕ тырăн ырă шăрши сарăлнăччĕ, унта ĕçлекенсем тырă типĕтнине ăнлантăм. Хуçалăхăн тĕп инженерĕ Иван Васильев каланă тăрăх, хиртен кӳрсе килнĕ тырра йăлтах çавăнта кĕртсе пĕтернĕ, ахальлĕн выртаканни çукчĕ.

Апла пулин те эпĕ пĕр килнĕ пек чухне складсене çитсе куртăм, унта ĕçлекенсемпе калаçрăм. Арçынсен бригади юсав ĕçĕпе тăрăшатчĕ, строительство материалĕ те, техники те унтах. Вĕсем хушшинче çамрăк ĕçченсем те пур. Çынсемпе калаçнăран ĕç япăх мар пынипе кăмăлĕсем лайăххине ăнлантăм. Тепĕр енче вара хĕрарăмсем акма хатĕрленĕ тырă патĕнче тăрăшатчĕç. Пĕтĕмлетсе каласан пур çĕрте те ĕç шавĕ тăратчĕ, вăл шутра машинăпа трактор паркĕнче те. Эпĕ хуçалăх ĕçченĕсене вырмара ăнăçу сунса уйрăлтăм.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Уй-хирте

# «Ударник» хуçалăх кĕр акине хатĕрленет

Уй-хире тухатăп та хам çамрăк чухне ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ вăхăтсене аса илетĕп. Малтанхи çулсенче Антари Панкли, Тури Панкли, Уçăпкасси, Хурăнкасси ялĕсен бригадисем пулнăччĕ. Тĕп кантур Анатри Панкли ялĕнче вырнаçнăччĕ.

1967 çулта мана вырăнти халăх пухура Хурăнкасси ялĕн бригадирĕ пулма шанчĕ. Эп тăрăшнине кура ман çине çынсем пысăк яваплăх хучĕç. Çак ĕçре эпĕ халăх шанăçне тӳрре кăларас тесе 18 çул тимлерĕм. Япăхах ĕçлемен пулĕ, хуçалăх экономикине аталантарас тесе вăй хутăм. Çынсем ун чухне ĕçлеме питĕ йышлăн тухатчĕç.

Пирĕн колхоз «Ленинец» ятлăччĕ. Каярах пĕр тытăма кĕрсе «Ударник» хуçалăх 13 яла пĕрлештерчĕ. Çапла пысăк хуçалăх пулса тăтăмăр. Хурăнкасси ялĕн акмалли çĕр лаптăкĕ 200 гектар майлăччĕ.

Эпĕ халĕ 83 çула çитрĕм пулин те, тырă акса тунисем, уй-хирте ĕçленисем асрах, улăх-çаран çулаттăмăр. Манăн кунта хальхи ĕçченсене ӳпкелес шухăш çук. Пирĕн вăхăтра та ĕçленĕ, халĕ те тăрăшаççĕ.

Пурнăç малаллах пырать, çĕнĕ технологисене алла илсе çĕнĕлле ĕçлеççĕ. Пирĕн



ватă çынсен, паллах, çамрăксем ĕçленине пăхса савăнмалла. Уйра халĕ унчченхи пек нумай техника ĕçлемест ĕнтĕ. Пысăк хăватлă техника ĕç хăвăртлăхне палăрмалла ӳстернине пăхса тĕлĕнетĕп эпĕ. Çавăн пекех çамрăксем ял пурнăçне суйланине, хуçалăхра ĕçленине куратăп та савăнатăп. Яла пĕтме памалла мар.

Акă кăçал та яланхи пекех пирĕн ял çывăхĕнчи 200 гектар çĕр çинче кĕрхи культура акмалла пулать. Хуçалăх ертӳлĕхĕ çапла тĕллев лартнă. Çамрăклăха аса илсе эпĕ уйра çĕр кăпкалатнине курма утрăм, механизаторпа калаçас, вĕсен тĕллевĕсене пĕлес терĕм.

Мана курсан Вăрманкасси çамрăкĕ Григорий Степанов **(сăн ӳкерчĕкре)** хăватлă трактора чарчĕ те çĕр çине анса тăрса сывлăх сунчĕ. Вăл виçĕ ача ашшĕ. Эпĕ, паллах, хуçалăхри ĕçсемпе, вырмапа кăсăклантăм, хам та çак хуçалăхра сахал мар ĕçленине пĕлтертĕм. Çакăнти çĕре вăл икĕ хутчен кăпкалатса тухнине каларĕ. Техникăпа çавăн пек тăрăшуллă çамрăксем ĕçленишĕн савăнатăп. Ăна сăн ӳкерсе илес килчĕ манăн.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

Патшалăх пулăшăвĕ

# Заявкăсем йышăнса пĕтернĕ

Чăваш Ен Ял хуçалăх министерстви «Перспектива» грант валли заявка йышăнса пĕтернĕ. Çак пулăшу мелĕ сыр тăвакансем, аквакультурăпа ĕçлекенсем, çырла ӳстерекенсем тата сурăх ĕрчетекенсем валли. Унпа фермер хуçалăхĕсем тата уйрăм предпринимательсем усă курма пултараççĕ.

Çак енпе ĕçлеме кăçал 20 перспективлă бизнес-план валли 125 млн тенкĕ пăхса хунă. Конкурс çĕнтерӳçисем сыр пĕçерме тата аквакультура валли 10 млн таран, çырла ӳстерме тата сурăх ĕрчетме 5 млн тенкĕ таран пулăшу тивĕçме пултараççĕ, – пĕлтерет Чăваш Ен ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов.

Заявка йышăнмалли тапхăрта республикăри профиль министерствине пĕтĕмпе 29 заявка панă. Конкурс комиссийĕ кашни ĕçе тишкерсе хак парĕ, пĕтĕмлетӳ август çурринче паллă пулать. Аса илтеретпĕр, «Перспектива» грант регион ертӳçи Олег Николаев ырланипе 2021 çултанпа вăйра тăрать.

**ЧР Ял хуçалăх министерстви.**

# Çĕнĕ техника туянма – пулăшу

***Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин официаллă сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Республикин Правительстви регион ертӳçи Олег Николаев ырланипе ял хуçалăх техникине çĕнетессине субсидилес механизма вăя кĕртме тытăннăранпа калăпăшлă ĕçсем пулăраççĕ. 2020 çултан тытăнса ял хуçалăх таварĕсем туса кăлараканссене çĕнĕ техникăпа оборудовани туянса тăкакланнин 35 – 50 процентне саплаштараççĕ. Çавна май çак мелпе усă курса Чăваш Ен аграрийĕсем 2023 çулта патшалăх пулăшăвĕпе 362 единица ял хуçалăх техники çĕнетме пултарнă.***

Чи пысăк пулăшу ставкипе хăмла ӳстерессинчи ятарлă техника туяннишĕн усă курма май пур. 45 процентлă çăмăллăх – выльăх-чĕрлĕх е выльăх-чĕрлĕхпе ӳсентăран отраслĕнче, çавăн пекех çĕр улми е пахча çимĕç туса илессинче ĕçлекенсем валли. 35 процентлă çăмăллăхпа вара ӳсен-тăран отраслĕнче кăна ĕçлекенсем усă курма пултараççĕ.

– Программа вăя кĕме тытăннăранпа аграрисен техника паркĕ 3,5 пин единица чухлĕ çĕнелчĕ. Эпир кĕтни куç умĕнче: 2020 çулта энергипе тивĕçтересси республикăра 110 лаша вăйĕпе танлашнă, халĕ вара ку кăтарту 129,5 лаша вăйне çитрĕ. Çавна май аграрисем сезонлă уй-хир ĕçĕсене оперативлăрах туса иртерме пултараççĕ, регионти кăткăс климатра ку питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ, – палăртать Чăваш Ен ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов.

Пулăшу Раççей территорийĕнче, Таможня пĕрлĕхĕнче, 2023 çултан тытăнса вара программа анлăланнă май, Китай Халăх Республикинче туса кăларнă тракторсемпе телескоп погрузчикĕсем çине те пулĕ. Çак çĕнĕлĕхе Чăваш Ен Ял хуçалăх министерстви çумĕнчи обществăлла канаш ларăвĕн пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх йышăннă. Ку канаша фермерсемпе аграрисем кĕреççĕ. Çак çĕнĕлĕхе санкцисене пула килсе тухакан йывăрлăха чакарас тĕлĕшпе йышăннă, унсăрăн аякран кӳрсе килекен саппас пайсем çукки уй-хирти ĕçе чылайлăха чарса лартма е чăрмав кӳме пултараççĕ.

Çак çулта ятарлă техника туянса тăкакланнине саплаштарма республика бюджетĕнче 500 миллион тенкĕне яхăн пăхса хунă. Вăл шутран 400-шĕ ял хуçалăх таварĕсем туса кăларакансем патне çитнĕ, унпа 362 единица техника çĕнетнĕ: 122 трактор, тырă вырмалли 19 тата выльăх апачĕ пухса кĕртмелли 4 комбайн.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Наци проекчĕ

# Турай çулĕ çинчи ĕçе тăвата уйăх маларах вĕçлерĕç



Округ территорийĕнче «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче республика пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче çуллен капиталлă юсав ĕçĕсем туса иртерессĕ. Иртнĕ эрнере эпĕ «Муркаш – Турай – «Сура» маршрутлă регион автоçул çинчи кĕпер тата ун çывăхĕнчи лаптăкри ĕçсене вĕçленине çитсе куртăм. Ĕçсене тапхăрăн-тапхăрăн 2023 – 2024 çулсенче туса иртерме палăртнă. Калăпăшлă юсав валли пĕтĕмпе республика бюджетĕнчен 22 млн тенкĕ, федераци бюджетĕнчен 215 млн тенкĕ уйăрма палăртнă.

Кăçал ĕçсене çулăн 16+800 км – 17+800 км тума палăртнă пулнă. Ку çул Муркаш тата Етĕрне муниципалитет округĕсене сыпăнтарать, вăл шутра Анаткасси, Çатракасси, Кĕçĕн Чураш ялĕсене.

Юсав иртермелли çул тăршшĕ 960 метрпа танлашать. Ку икĕ çырмана сыпăнтаракан çул çĕмĕрĕлсе пĕтнĕччĕ, чи кăткăс лаптăкчĕ, пысăк дамба япăхса çитнипе шыв лайăххах юхаймастчĕ. Пĕтĕмлетсе каласан, çул лаптăкĕ нормăпа килĕшсе тăман. Кунта халĕ çул сийне танлаштарса йĕркене кĕртнĕ, искусствăлла сооружение – дамбăна тĕпрен улăштарнă. Каçă вырăнĕнчи çул çӳллĕшне чылай хăпартнă, çырма урлă каçмалли тăвайккиллĕ çула самай сĕвеклетнĕ. Çул-йĕр строителĕсем çул çине, айккисене, шыв юххине тата ку тĕлĕшри кирлĕ ытти ĕçе тунă. Кивĕ пăрăха çĕнĕ тимĕр бетон пăрăхпа улăштарнă. Унччен пĕр метрлă пăрăхсем пулнă пулсан, халĕ икĕ метр диаметрлă тăваткал пăрăхсем хурса хăварнă. Çул-йĕр паллисем лартнă, çул çинчи йĕрсене тунă.

Такăр çулпа пыма халĕ питех те меллĕ. Çул-йĕр строительствин ĕçĕсене «Дорстар» чикĕллĕ яваплăхлă общество пурнăçланă. Подрядчик ĕçе январь уйăхĕнче пуçланă. Ун чухне хăватлă техникăпа коллектив сивĕ хĕл кунĕнче епле ĕçленине пăхса тĕлĕннĕччĕ эпĕ. Вак чулпа хăйăрне кунти ĕç валли маларах турттарса хатĕрленĕ.

– Çак лаптăкри ĕçе вĕçлерĕмĕр, юлашки туса çитермелли ĕç кăна юлчĕ. Хамăра шаннă ĕçе срокчен тăватă уйăх маларах вĕçлерĕмĕр. Килĕшӳ тăрăх ноябрь уйăхĕнче вĕçлемеллеччĕ. Ĕç кал-кал пычĕ, чăрмав таврашĕ пулмарĕ. Вырăнти влаçпа килĕштерсе ĕçлерĕмĕр, вĕсен ăнланулăхне те куртăмăр



эпир. Паллах, çак çул çинче çӳрекен автотранспорт водителĕсене те ырăпа палăртас килет. Кунта çак вăхăтра калăпăшлă ĕçсене туса иртернĕрен автотранспорта вăхăтлăх чарма тиврĕ, тепĕр чухне вĕсен ытларах та кĕтсе тăма лекрĕ, çулпа çӳресси пĕр енлĕ те пулчĕ. Юсавлă çул лайăххах пулнине пурте ăнланчĕç, харкашу таврашĕ пулмарĕ. Коллектив вара тăрăшса ĕçлерĕ, кашни вăхăтпа туллин усă курчĕ, çак лаптăкри ĕç хакĕ çĕр миллион тенкĕ шайĕнче пулчĕ, – терĕ асăннă организаци прорабĕ Алексей Плисов.

Çакна та палăртса хăвармалла, 2024 çул валли «Муркаш – Турай – «Сура» маршрутлă автоçулăн 20+420 км – 24+020 км лаптăкĕнче иккĕмĕш тапхăрпа капиталлă юсав ĕçĕсем туса иртерме палăртнă.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

# Отаркка çулĕ те питĕ меллĕ



Чăваш Республикин Транспортпа çул-йĕр хуçалăхĕн министерствин официаллă сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, кăçал регионта «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ пулăшнипе 112 километр тăршшĕ çул-йĕр çыхăнăвĕн 66 объектне норматив шайне çитерме палăртнă. Халĕ шăпах та ку енĕпе хĕрӳ тапхăр пырать, асфальтпа бетон сийне хунă çул-йĕр шайĕ 66,7 процентпа танлашать.

Аса илтеретпĕр, Чăваш Ен çак ĕçсене пурнăçлама тата çул тăвас ĕçе хăвăртлатма федераци бюджетĕнчен татах 1,2 миллиард тенкĕ тивĕçнĕ. Çак укçа-тенкĕне «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче пыракан ĕçсене палăртнă вăхăтран маларах вĕçлеме уйăрнă. Ку укçа 49,4 километр çинчи çул валли пулĕ. Çак лаптăкри ĕçсене кăçал вĕçлемелле, вăл профиль министрĕн Владимир Осиповăн контролĕнче. Вĕсене ноябрь вĕçленичченех туса пĕтермелле.

Отаркка патнелле каякан çул иртен-çӳрене чылай каласлатарчĕ. Çул çинчи шăтăк-путăка сапланине шута илмесен тĕплĕ юсав ĕçĕ тахçанах иртмен, çавна май унти лаптăк самай япăхнăччĕ. Саплани те кĕске вăхăтлăх кăна пыратчĕ. Пахалăхсăр çул вара çынсем умне хăрушлăх кăларса тăратма пултарать.

Кăçал «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» маршрутлă автоçулăн Отаркка патĕнчен иртсе каякан сыпăкне тĕпрен юсарĕç. Ĕç «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче иртрĕ. Шарпаш ялĕ патĕнчи çаврăмран пуçласа Отаркка патĕнчен иртекен 2 километр тăршшĕ çул пайне «Дорсервис» чикĕллĕ яваплăхлă общество çĕнетрĕ. Çул пайне тĕпрен юсама 18,5 млн тенкĕ уйăрма палăртнă. Вăл шутран 1,3 млн тенкĕне яхăн – муниципалитет округ бюджетĕнчен, ытти – республика бюджетĕнчен.

Хатĕрлев ĕçĕсене килĕшӳринчен маларах – апрель вĕçĕнче – пуçăнчĕç. Çул çине малтан тикĕслерĕç, çул айккисене майлаштарчĕç, пусăрăннă хыççăн кĕске вăхăтра асфальт сарчĕç. Шаннă ĕçе йĕркеллĕ пурнăçласа хăйсене те, муниципалитета та чăрмав тумарĕç. Килĕшӳ тăрăх ăна августăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле пулсан, организаци çула нормативпа пăхнă шая кĕске вăхăтра çитерчĕ.

Ĕç заказчикĕ – Муркаш муниципалитет округĕн администрацийĕ тата строительство тĕрĕслевĕ – «Чувашупрдор» хысна учрежденийĕ объекта йышăнассипе тимлеççĕ.

Ку çулпа çӳреме питĕ меллĕ.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Округра

# Капиталпа усă курма 30 заявлени йышăннă

***Пĕлетпĕр, виçĕ тата ытларах ачаллă çемьесене ача амăшĕн (çемье) республика капиталĕпе тивĕçтерме пăхнă. Ку укçа-тенкĕне çемьесем хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, ачана вĕрентме тата инвалид ачан социаллă адаптацийĕ валли тĕрлĕ тавар туянма е услугăпа усă курма уйăрма пултараççĕ.***

2022 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вара капитал укçи-тенкине çăмăл автомашина туянма та уйăрма май пур. Автомашина икĕ çултан маларах туса кăларни пулмалла мар, двигатель хăвачĕ 150 лаша вăйĕнчен иртмелле мар, автомашина Раççей территорийĕнче туса кăларни пулмалла. Çитменнине автомашина туянакан çемьен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем тивĕçтермелле.

2023 çулхи июлĕн 23-мĕшĕ тĕлне ача амăшĕн (çемье) республика капиталĕпе усă курма Муркаш округĕн социаллă хӳтлĕх пайĕнче 30 заявлени йышăннă.

Çемьен республика капиталĕпе çемьери виççĕмĕш тата хыççăнхи ача виçĕ çул тултарнă хыççăн усă курма май пур. Енчен те укçа-тенкĕне пурăнмалли çурт-йĕр туянма илнĕ кредит парăмне е процентсене тӳлесе татма уйăраççĕ пулсан вара маларах та илме пулать. Ку шутах инвалид ача валли таварсем илесси, услугăсемпе усă курасси те кĕреççĕ.

**Округри социаллă хӳтлĕх пайĕ.**

Демографи ыйтăвĕсемпе

# Ял шкулĕ ĕмĕр пултăр пĕлӳ пухма ачасене

«Ял шкулĕ» тесен чылайăшĕн куçĕ умне çакăн пек сăн укерчĕк тухса тăрать: йывăç çурт, çутă та пĕчĕк классем, ырă куçпа пăхакан вĕрентекен… Çутă та хăтлă классемлĕ Москакасси шкулĕ 1907 çулта уçăлнă. 1980 çулта пĕлӳ çурчĕн сăнĕ улшăннă, ăна çĕнĕрен кирпĕчрен виçĕ хутлă тунă. Çĕр вунултă çул хушшинче асăннă вĕренӳ учрежденийĕ ял ачисен темиçе ăрăвне вĕрентсе кăларнă. Тăхăрвуннăмĕш çулсенче кашни ӳсĕмре вицшер класпа вĕренеттĕмĕр. Шкула 600 ача патнелле пухăнатчĕ.

Паянхи кун Москакасси шкулĕнче 175 ача пĕлӳ илет. Çавăн пекех шкулта шкул çулне çитмен ачасен икĕ ушкăнĕ пур. Кунта вара 50 ача çӳрет. Унсăр пуçне шкул çумĕнче районти ача-пăча музыка шкулĕн кăтартуллă «Калинка» ташă коллективĕ тата ачасемпе çамрăксен «Сывлăх» спорт шкулĕн бокспа ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцийĕсем ĕçлеççĕ. Шупашкарти иккĕмĕш спортшкулăн биатлон секцийĕ пур. Виçĕ хутлă çуртра 13 вĕренӳ кабинечĕ, компьютер класĕ, библиотека, краеведени музейĕ, акт залĕ, столовăй вырнаçнă. Мастерскойпа спорт залĕ те пур. Унсăр пуçне шкул çумĕнче çĕр лаптăкĕ пур. Унта вĕренекенсем хăйсем пахча çимĕç çитĕнтереççĕ.

Вĕренӳ учрежденине кадрсемпе туллин тивĕçтернĕ. Директор лавне Екатерина Бирюкова туртать. Вăл ертсе пыракан коллективра 20 учитель ĕçлет. Вĕрентекенсем тăтăшах хăйсен квалификацине ӳстереççĕ. Вĕсем районпа республика шайĕнчи пултарулăх конкурсĕсене тата наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнаççĕ.

Москакасси шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературин урокĕсене Ирина Пушкинăпа Марина Васильева ертсе пыраççĕ. Вĕсем хăйсен урокĕсенче чунĕсене парса ĕçлеççĕ, ачасене чăваш чĕлхине юратма вĕрентеççĕ. Вĕрентекенсем тăрăшни сая кайманнипе республика шайĕнче иртнĕ олимпиадăсенче тĕрлĕ çулта призер ятсене тивĕçнĕ Татьяна Андреевăпа Оля Григорьева çирĕплетеççĕ. Паянхи кун пĕтĕм шкулĕпе пур вĕренекен те тăван чĕлхе илемне туйма вĕренет.

– Паллах, тăван чĕлхе урокĕсен шутне чакарни, çемьесенче ытларах вырăсла калаçни йывăрлăх кăларса тăратать, – тет Ирина Ивановна. – Çавăнпа олимпиадăсене хатĕрлемелли ачасем сахалрах. Аппа пулин те эпир парăнмастпăр, чăваш чĕлхипе культурине, йăли-йĕркине упраса хăварас тата аталантарас тĕллĕвпе ĕçлетпĕр.

Çапла, Москакасси ялĕнчи вăтам шкулта ачасене аталанмалли лайăх условисем туса панă. Çутă та хăтлă классемпе хальхи оборудованипе тивĕçтернĕ пӳлĕмсем тарăн пĕлӳ илме май параççĕ. Анчах демографи лару-тăрăвĕ япăххахри çеç кăмăла пăсать. Çулталăка вуникĕ – вунвиçĕ ача çуралнипе ача садне те, шкула та тулли комплектлă тăваймастăн. Çакă вара ял халăхĕнчен хăйĕнчен çеç килет.

**Олег ТАРАСОВ.**

Çĕнĕлĕхсем

# Августран мĕн улшăнчĕ?

*Яланхи пекех, август уйăхĕ те çĕнĕлĕхсемсĕр мар. Мĕн çĕннине илсе кĕртрĕ-ха çу кунĕсен юлашки уйăхĕ пирĕн пурнăçа? Тĕплĕнрех кун пирки – «Известия» материалĕнче.*

**Цифра тенки пулать**

Цифра тенкине (цифровой рубль) пурнăça кĕртесси тата унăн электрон платформине туса хурасси пирки калакан саккун августăн 1-мĕшĕнчен вăйра. Документа Раççей Президенчĕ Владимир Путин июлĕн 24-мĕшĕнче алă пуснă.

Цифра тенки – наци валютин виçĕ тĕсĕнчен пĕри пулса тăрать. Унсăр пуçне, пĕлетпĕр ĕнтĕ, наличнăй тата наличнăй мар формăсем пур. Унăн операторĕ Тĕп банк пулса тăрать. Палăртнă тăрăх: укçа-тенкĕ цифра кочĕн мелĕпе регуляторăн электрон енчĕкĕнче (кошелек) упранĕ. Уйрăм çынсем унпа кирек епле банкăн хăйăхнă приложенийĕсем пулăшнипе усă курма пултарĕç. Анчах та тĕрех мар: анлăн усă курма кун пек тенкĕ 2025 – 2027 çулсенче кăна килсе çитĕ. Хальлĕхе ăна кредит организацийĕсем тата юридици сăпачĕсем тестласа пăхĕç.

Тĕп банк палартнă тăрăх, цифра тенкине тӳлевсем тума тата укçа-тенкĕ куçарма йĕркелеççĕ, усрама тата кредитлама мар. Çавăнпа та енчĕк çине кешбэк та, процентсем те пулмаççĕ. Анчах та унпа усă курса малашне кирек епле тӳлев те тума май килĕ, çавăн пекех банкри счет çине укçа куçарма та, наличнăй укçа илме те.

Наци валютин çĕнĕ форми обязательнăй пулмасть. Раççей çыннисем яланхи пекех хăйсене килĕшекен тӳлев формипе усă курма пултарĕç. Цифра енчĕкĕ кашни çыннăн пĕрре кăна пулма пултарать. Тĕп банка хушма приложенисем те, çыннăн хушма данăйĕсем те кирлĕ пулмаççĕ.

**Пенси ӳсрĕ**

Ĕçлекен пенсионерсене августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсие çĕнĕрен шутласа параççĕ. Пенси виçи чи нумайăи виçĕ балл хакĕ чухлĕ ӳсме пултарать. Ӳсĕм мĕн чухлĕ пуласси Социаллă фонда куçарса тăнă взноссенчен тата çын пенсие хăçан тухниннчен килет. Калăпăр, çын пенсие 2022 çулта тухнă пулсан, ӳсĕм 354 тенкĕпе танлашать. Заявлени çырма кирлĕ мар: пенсие çĕнĕрен автоматла майпа шутласа параççĕ.

Яланхи пекех, августăн 1-мĕшĕнчен пенсионерсен татах икĕ категорийĕн тӳлевсем ӳсрĕç. Пĕрремĕшĕ – 80 çула çитнĕ пенсионерсен. Вĕсем пенсин икĕ хут пысăклатнă фиксированнăй пайне илсе тăраççĕ. Халĕ вăл 7567 тенкĕпе танлашать. Иккĕмĕшĕ – ĕçлемен пенсионер статусне куçнисен. Вĕсен пенси унченхи индексаци чухлĕ ӳсет.

**Утилизаци тӳлевĕн индексацийĕ**

Августăн 1-мĕшĕнчен Раççейре çăмăл, коммерциллĕ çăмăл, груз турттармалли автомашинăсен тата автобуссен утилизаци тӳлевне индексацилеççĕ. Улшăнусем ют çĕршывра туса кăларнă çĕнĕ тата усă курнă автомашинăсем илсе килекен юридици сăпачĕсене пырса тивеççĕ. Автомашина двигателĕн калăпăшĕ 3 литртан пĕчĕкрех пулсан, хăйсем валли автомашина илсе килекен уйрăм çынсене çакă пырса тивмест. Вĕсем валли утилизаци тӳлевĕн тарифĕ унченхи пекех юлать: 3 çултан çĕнĕрех автомашинăсемшĕн – 3,4 пин тенкĕ, 3 çултан аслăраххисемшĕн – 5,2 пин тенкĕ.

Çĕнĕ çăмăл автомашинăсен утилизаци тӳлевĕн ставкине двигатель калăпăшне кура вăтам шутпа 1,7 – 3,7 хут, коммерциллĕ çăмăл автомашинăсенне – 2,5 – 3,4 хут, груз турттармалли автомашинăсенне – 1,7 хут ӳстернĕ. Автобуссен утилизаци тӳлевĕ 2,2 – 4,8 хут ӳснĕ, электробуссен – 8,7 хут.

Енчен те уйрăм çын 2023 çулхи августăн 1-мĕшĕ хыççăн ют çĕршывра туса кăларнă автомобиль илсе килет тата пĕр çулталăк хушшинче ăна Раççейре сутма шутлать пулсан, унăн утилизаци тӳлевне туллин, юридици сăпачĕсем пекех тӳлеме тивет. Çавăн хыççăн автомашинăна çĕнĕ харпăрçă çине регистрацилеме май пулĕ. Уйрăм çынсем тĕлĕшпе улшăнусем курăмлă. Сăмахран, компанисем валли «Jetta VA3» илсе килме утилизаци тӳлевĕ 178,4 пин тенкĕрен 306 пин тенкĕне çитет пулсан, уйрăм çыннăн автомашина сутас тĕллевпе илсе килме 3,4 пин тенкĕрен 306 пин тенкĕне çитет. Кунсăр пуçне уйрăм çын çулталăк хушшинчен пĕр автомашинăран ытларах илсе килет пулсан та утилизацишĕн туллин тӳлемелле пулать.

Экспертсем палăртнă тăрăх, çĕнĕлĕхсем хамăр çĕршывра туса кăларнă автомашинăсен хакĕ çинче палăрмалла мар. Иномаркăсем вара самай хакланма пултараççĕ.

**Йышăну кампанийĕ вĕçленет**

Çу вĕçĕнче Раççей аслă вĕренӳ заведенийĕсенче йышăну кампанийĕ вĕçленет. Суйласа илнĕ вĕренӳ заведенине пĕрлехи конкурспа вĕренме кĕме документсен оригиналĕсене августăн 3-мĕшĕччен пама май пулнă. Вĕренме кĕме илни пирки хушусем августăн 4 – 9-мĕшĕсенче тухаççĕ. Августăн 29-мĕшĕччен вара бакалавриат тата специалитет программисемпе вĕренме хушма йышăну та вĕçленет.

**Электрон визăпа – меллĕрех**

Ют çĕршыв турисчĕсене Раççее килме лайăхрах майсем туса панă: августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса вĕсем пĕрлехи электрон виза илме пултараççĕ. Вăл пĕтĕм çĕршыв шайĕнчех вăйра пулать. Хальлĕхе асăннă услугăпа 52 çĕршыв гражданĕ усă курма пултарать. Списока анлăлатма палăртаççĕ.

Кун пек виза çĕршыва турист пулса, ĕç тĕллевĕпе, çавăн пекех наука, культура, спорт тата ытти мероприятисене пĕр хут килсе кайма ирĕк парать. Виза ăна илнĕренпе 60 талăк хушши, Раççее килнĕренпе вара 16 кун хушши вăйра пулать. Документ пулсан автомашинăпа, самолетпа е шыв транспорчĕпе килме юрать кăна мар, çавăн пекех чикĕ урлă çуран та каçма май пулать.

**Китая – визăсăрах**

Августăн 1-мĕшĕнчен Раççей, Китай тата Иран туристсем валли визăсăр режим пурнăçа кĕртнĕ. Раççей экономика аталанăвĕн министрĕ Максим Решетников палăртнă тăрăх, çакă пирĕн çĕршыва килекен туристсен шутне самай ӳстерме тивĕç.

Хальхи вăхăтра Раççее тӳрĕ рейспа 30 ытла çĕршывран вĕçсе çитме май пур. Географие татах анлăлатма палăртаççĕ.

Экспертсен шухăшĕпе Китайпа визăсăр майпа хутшăнмалла туни Раççей экономики çинче лайăх енчен палăрма кирлĕ. Уйрăмах Инçет Хĕвел тухăçĕнче. Кунта çавна валли кирлĕ инфраструктура çителĕклĕ: пăрахутсем, автобуссем, çулсем, çуран çӳрекенсем валли тунă кĕперсем т. ыт. те.

**Санкт-Петербургри курорт тӳлевĕ**

Санкт-Петербургра çавăн юлашки уйăхĕнче курорт тӳлевĕ пурнăçа кĕртеççĕ. Программа 2024 çул вĕçлениччен тест режимĕпе ĕçлет. Çул çитнĕ çын отельре е вăхăтлăх пурăнмалли ытти вырăнта пĕр талăкран ытларах вăхăт чарăнса тăма шухăшларĕ пулсан, пурăннин тӳлевĕсĕр пуçне татах 100 тенкĕ хушса тӳлеме тивет. Çапла майпа пухăннă укçа-тенкĕ хула бюджетне каять, унпа инфраструктурăна аталантарма та усă курĕç. Граждансен çăмăллăхпа усă куракан категорине çак çĕнĕлĕх пырса тивмест.

**«Известия».**

Çемье

# Çулсен вăрттăнлăхĕ – сывă пурнăç йĕркинче



Турай территори пайĕнчи Лениана Александровнăпа Николай Егорович Егоровсем нумаях пулмасть «тимĕр» юбилей паллă турĕç. Вĕсем пĕрлешнĕренпе 65 çул çитрĕ. Мăшăр çине пăхсассăн вĕсем пĕр-пĕрне хисеплесе, ăнланса пурăннăн туйăнать.

– Пĕрле çапла 65 çул килĕштерсе, хисеплесе пурăннинче темĕнле вăрттăнлăхах çук ĕнтĕ. Пĕр-пĕрне ăнланнă, пĕр-пĕрин сăмахĕпе шухăшне шута хунă. Чашăктирĕк сас памасăр пулмасть, паллах, эпир ытлашшиех сас кăларман. Урлă сăмах пулсан та каçарма пĕлнĕ, çилленсе пурăнман. Пĕр-пĕрне суясси, улталасси пулман. Арăм упăшкана хисепленĕ, унăн сăмахĕнчен иртсе кайман, упăшка та арăма шута хунă, пулăшса пынă. Çапла пурăннă эпир, ачасем ашшĕ-амăш сăмахне итленĕ. Малалла та килĕштерсе пурăнасчĕ. Халĕ мăнуксемшĕн, кĕçĕн мăнуксемшĕн савăнатпăр, – тет кăмăллăн мăшăр.

Çак паллă кунпа Егоровсене Муркаш муниципалитет округ пуçлăхĕ Алексей Матросов ячĕпе тата хăй ятĕнчен муниципалитет округ администрацийĕн ЗАГС пайĕн ертӳçи Елена Иванова саламларĕ.

– Сирĕн пек туслă çемьесем пирĕн обществăн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Эсир – çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх. Эсир хăвăрăн ултă ачăра кăна воспитани паман, çĕршер хĕр ачапа арçын ачана вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Эпир сирĕнпе хăпартланатпăр. Сирĕн юратупа çивĕчлĕх пурнăçа çутă та вăрăм туччăр. Сывлăхпа ăнăçу сире, – терĕ Елена Львовна мăшăра саламласа.

Елена Иванова мăшăра чечек çыххипе асăнмалăх парне тата Чăваш Республикин юстици ĕçĕсен патшалăх службин ертӳçин Дмитрий Сержантовăн Тав çырăвне парса чысларĕ. Акă çамрăк чухне мăшăрланнă пекех хисеплĕ çынсем алă пусрĕç, ку хутĕнче – Муркаш округ администрацийĕнчи хисеплĕ çемье юбилярĕсен кĕнеки çине. Вĕсене саламлакансем татах та пулчĕç.

Мăшăр çамрăк чухнехине, хăйсем пĕрлешнĕ вăхăта кăмăллăн аса илет. Анаткассинчи Кольăпа Етĕрнери Саръял хĕрĕ Лениана 1945 – 1948 çулсенче Етĕрнери педучилищĕре пĕрле вĕреннĕ. Паллах, ун чухне вĕсем çулсем кайнăçемĕн пĕр-пĕрне çав тери хытă юратасса, килĕштерессе шухăшлама та пултарайман пулĕ.

Çапла вунă çул иртсен вĕсем, хăйсен ĕçĕсемпе Шупашкар хулине пынăскерсем, Карл Маркс урамĕнче тĕл пулнă. Тушкасси шкулĕн ертӳçи Николай Егорович Пионерсен çуртне хăйĕн ĕçĕпе пынă. Лениана Александровна вара Каршлăхри ача-пăча санаторийĕнче воспитательте ĕçлекенскер, аслă педагога пĕрле республикăн Сывлăх сыхлав министерствине çитнĕ. Мĕн тетĕр? Çамрăк хĕр пĕрле вĕреннĕ каччăна тӳрех палласа илнĕ. Икĕ çамрăк сывлăх сунса калаçма пуçланă, пĕрле вĕреннине аса илнĕ, хăйсен ĕçĕсене сӳтсе явнă.

Каччăн чĕри вырăнтан тапраннă пулас, нумай та вăхăт иртмен, вăл май уявне хĕр патне санатори çитнĕ. Каярах тепре кайма тухнă та, анчах вăл еннелле çӳрекен автобуса кĕтсе илеймен, каччă нумай шухăшласа тăман, хĕр ашшĕ-амăшĕн килне çула тухнă. Унталла вара автобус шăпах та пулнă. Вĕсем патне çитнĕ те Ленианăна каччă илме хатĕррине пĕлтернĕ. Тĕлĕнмелле пулса тухнă, хĕр çакăн пирки ун чухне пĕлмесĕрех юлнă. Çамрăксем хĕрпе каччă пек нумаях та çӳремен, çемье çавăрнă.

Часах çамрăк арăм мăшăрĕ патне шкула ĕçлеме куçнă. Çав вăхăтранпа вĕсем ялан пĕрле, ĕçре те, килте те. Егоровсем хăйсен ĕç ĕмĕрне ачасене воспитани парассине халалланă. Николай Егорович 43 çул пуçламăш классен учителĕнче тăрăшнă, вăл шутра 36 çулне Тушкассинчи пуçламăш шкула ертсе пынă. Лениана Александровнăн та педагогикăри стажĕ çавăн чухлех, 13 çулне Анаткассинчи пуçламăш шкула ертсе пынă. Шкултан таврăнсан вара вăл колхоз ĕçне васканă, утă çулнă, улăм ури тунă çĕре хутшăннă, ытти ĕçре тăрăшнă.

Юбилярсем ĕç çулĕсенче тата хыççăн та нумай наградăна тивĕçнĕ. Вĕсенчен чи сумли – «Родительская слава» орден медалĕ. Николай Егорович – Муркаш районĕн Хисеплĕ гражданинĕ. Лениана Александровна 1 тата 2 степеньлĕ Амăшлăх медальне тивĕçнĕ. Вĕсен пур чысламне асăнса та пĕтереймĕн, нумай вĕсем. Çемье, паллах, ачасем – Егоровсемшĕн чи пысăк пуянлăх. Пурте таса сывă пулни темĕнле наградаран та паха. Мăшăр ултă хĕр ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тăратнă. Халĕ вĕсем 14 мăнукăн тата 19 кĕçĕн мăнукăн тимлĕхне туяççĕ, вĕсемшĕн савăнаççĕ. Егоровсен ачисем ачалăх вăхăтне ăшшăн аса илчĕç, хăйсене телейлĕ кун-çул парнеленĕшĕн ашшĕ-амăшне тав турĕç. Ăсталăхпа пултарулăх ашшĕ-амăшĕнчен ачисене куçнă, вĕсенче хăйне майлă талант палăрать.

Егоровсем, 93 çулта пулсан та, активлă, çамрăк чухнехи пекех вăр-вар. Сывă пурнăç йĕркине çирĕп пăхăнни, халăх медицинипе туслă пулни пулăшать хăйсене виçерe тытма. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, физкультурăпа туслă пулма мăшăр ыттисене те сĕнет. Лениана Александровна калана тăрăх, тĕпрен илсен, вăл яппун гимнастикипе туслă. Кашни кун пĕршер сехет гимнастика тăвасси –мăшăршăн яланах йăлара.

Çамрăк чухне вĕсем учительсем пулнă пулсан, тивĕçлĕ канăва тухсан та вĕрентекен ĕçне малалла тăснă тесен пачах та йăнăш мар. Николай Егорович тивĕçлĕ канăва тухсан икĕ кĕнеке пичетлесе кăларчĕ: «Çĕр чăмăрĕ тавра икĕ хут» тата «Эмелсĕр сипленме». Çавăн пекех вăл хăйĕн сĕнĕвĕсене «ЗОЖ» хаçатра пичетлесе тăчĕ. Сиплевпе усă курнисем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен тав туса çыраççĕ ун патне. Николай Егорович эрех-пируса сивлет, ытларах хускану тума сĕнет.

Çакăн пек пултаруллă çынсем пирĕн хушăра пулни савăнтарать. Юбилей çулĕсем вĕсен нумай пулччăр.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

**Çĕнĕ кĕнеке**

# Галина Анисовăн сăвă пуххи кун çути курчĕ




**Ачасем çуллахи кунсемпе киленнĕ, каникулта савăннă хушăра Чăваш кĕнеке издательствин ĕçченĕсем çанă тавăрсах вăй хураççĕ – ӳнерçĕсем ӳкереççĕ, редакторсем редакцилеççĕ, корректорсем йăнăшсем шыраççĕ. Кăларăм кун çути курни вара чăн-чăн уяв пулса тăрать. Паянхи эрнекун пире Галина Анисовăн сăвă пуххине парнелерĕ. «Бабочка и пчела. Лĕпĕшпе вĕлле хурчĕ» ятлăскерне кĕçĕн çулхи ачасем валли хатĕрленĕ. Унта вырăсла тата чăвашла хайланă сăвăсем кĕнĕ. Вĕсене Лариса Петрова пултаруллă çамрăк поэт чăвашла куçарнă. Кĕнеке страницисене Татьяна Бурдинăн хӳхĕм ӳкерчĕкĕсем капăрлатаççĕ. Редакторĕ – Ольга Иванова. Кăларăм 1000 экземплярлă тиражпа пичетленнĕ.**

**Мĕнпе кăсăклă-ха вăл? Галина Анисовăн сăввисенчи сăнарсем – паянхи арçын ачасемпе хĕр ачасем. Вĕсем шкулта тăрăшса вĕренеççĕ, аквапаркра, циркра, пăр çинче вăхăта хаваслă ирттереççĕ, выляма юратаççĕ. Мĕнпур ачапча пекех, шăл тухтăрĕ патне кайма шикленеççĕ («Шăл ыратсан»), ашшĕ-амăшĕ е кукашшĕ-кукамăшĕ асăрхаттарнине итлемесĕр ытлашшипех çырла çисе лартаççĕ («Кукамайăн пахчинче»), шкулти тăхтав вăхăтĕнче тумланма мансах урама вирхĕнсе тухаççĕ («Тăхтавра»)... Унсăр пуçне вĕсем аслисене пулăшаççĕ тата, паллах, Интернетра лараççĕ.**

**Тытмалла, пытанмалла та**
**Вылямасть ача-пăча.**
**Телефон вăййи ытла та**
**Илĕртет-ши кун каçа?**
**Унăн умĕнче вăл вăйсăр –**
**Хăй патнех туртать экран…**
**(«Вырсарникун»).**

**Автор Чăваш Енри чи вать юмана та тимлĕх уйăрнă:**

**Чăваш Енĕн ват юманĕ**
**Пурăнать Ильинкăра.**
**Тем те тӳснĕ – кам ăнланĕ?**
**Виç çĕр çул та ытларах!**
**(«Чăваш Енĕн ват юманĕ».)**

**Кĕнекене çавăн пекех юптарусем кĕнĕ. Вĕсенче автор наянлăха («Лĕпĕшпе вĕлле хурчĕ»), мухтанчăклăха («Ула куракпа шăпчăк», «Ăмăрткайăкпа турткăш»), туслă пулма, пĕр-пĕрне ăнланма пĕлменнине («Туссем»), айванлăхпа пустуй хĕвĕшӳе («Кăткă тĕми») тата ытти ене питлет.**

**Ольга АВСТРИЙСКАЯ.**

**Педагогпа наставник çулталăкĕ**

# Пурнăçне вĕрентӳве халалланă

Кашни çыннăн пурнăçнех вăл çĕр çинче мĕнле йĕр хăварнине тĕпе хурса хаклаççĕ. Çурлатринче пурăннă В.М. Моисеев вара хăйĕншĕн çеç пурăнма пултарайман. Педагогикăра, обществăлла ĕçсенче тарăн йĕр хăварнă вăл. Муркашри тата ку тăрăхри ялсенче тĕрлĕ ӳсĕмри çынсемшĕн Влас Моисеевич пурнăç çулне палăртма пулăшнă пысăк опытлă вĕрентекен тата наставник пулса яланлăхах асра юлнă. Вăл вăтăр пилĕк çул шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Пархатарлă çул утса тухнă.

Паян сире, хаклă вулаканăм, Муркаш вăтам шкулĕн вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ пулнă В. Моисеев çинчен каласа парас килет. Ун пирки вăл чăнчăн учитель тата наставник пулнă тесе çирĕплетсех калама пулать.

Влас Моисеевич Муркаш территори пайĕнчи Çурлатри ялĕнче 1918 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Муркаш шкулĕнче вĕреннĕ чухнех çивĕч ăслăхсерне çирĕп пĕлӳ илес тени малалла талпăнма вăй парса тăнă. Вĕренӳре те, шкулăн обществăлла пурнăçĕнче те хастарлăхпа палăрнăскер аслă пĕлӳ илме ăнтăлнă. Алла аттестат илсен И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. 1939 çулта дипломлă каччăна Муркаш вăтам шкулне направленипе ĕçлеме янă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан унăн хаяр вăрçă çулĕпе утса тухма тивнĕ. Вăл – вăрçă участникĕ, инваличĕ. Батарея командирĕ пулса лейтенант званипе тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнă. Икĕ орден кавалерĕ.

Вăрçăран суранланса таврăнсан малтанах Москакасси шкулĕнче директорта тимленĕ. Хыççăн Муркаш шкулĕнче 30 çула яхăн вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ.

Кашни вĕрентекен хăйне майлă пултаруллă. Влас Моисеевич хăйĕн ĕç ĕмĕрĕнче педагогсен республика шайĕнчи конкурсĕсене хастар хутшăннă. Педагогсен «Вырăс чĕлхипе литературин чи лайăх урокĕ. Класс тулашĕнчи мероприяти урокне хатĕрлесси» республика конкурсĕн çĕнтерӳçи те пулнă.

Вăтам шкулăн сукмакне такăрлатма пуçласан учитель иккĕмĕш атте пулса тăрать. Вăл пире мĕн пĕчĕкрен ырăпа усала уйăрма, Тăван çĕршыва юратма тата хаклама, атте-аннене хисеплеме вĕрентнĕ, ваттисене сума сума хăнăхтарнă, тăванлăхпа туслăх вăйне туйма пулăшнă. Влас Моисеевич таса чунлă, хăйĕн ĕçне чун-чĕререн парăннă çын пулнă çав тапхăрта. Ачасене тарăн пĕлӳ панă, хăйĕн вĕренекенĕсем хастар пулччăр тесе тăрăшнă. Унăн пултарулăхĕ тапса тăнă.

Шкулта вĕреннĕ çулсем – чи хаваслă та асра юлмалли вăхăт. Вăл кашни çыншăнах ачалăхпа, яшлăхпа çыхăннăран, пурнăçăн пĕр пайĕ пекех пулса тăрать. Хăйсен шăпине шкул пурнăçĕпе çыхăнтаракансемшĕн, паллах, ĕмĕр манăçмаççех çав вăхăтсем. Ырă учителĕн тивĕçĕ вара уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулнине пĕлетпĕр. Мĕншĕн тесен кунта пурте пĕр-пĕрне палласçĕ тата лайăх пĕлеççĕ. Вĕрентекен те хăй лайăх пĕлекен çемьесенчи ачасене тивĕçлĕ пĕлӳ тата воспитани парассишĕн пысăк яваплăх илет. Темиçе ăрури ача-пăча унăн алли тата чун-чĕри витĕр тухать. Кăмăл-туйăм тĕлĕшпе илсен те тĕрлĕ енлĕ аталанакан тата шухăш-тĕллевлĕ ача-пăчашăн учитель ашшĕ-амăшĕ пекех çывăх пулса тăрать.

Влас Моисеевич яланах ачасене юратнипе, вĕсене кирек хăш самантра та пулăшма хатĕр пулнипе, тӳрĕ кăмăлĕпе палăрса тăнă. Пурăннă чухне вăл хăйсен пурнăçне шкулпа çыхăнтарма шухăшлă çамрăксене яланах çапла калатчĕ: «Учитель пулас килсен пĕтĕм чĕререн ачасене юратмалла. Ачасене тĕрĕс воспитани парас тĕллевпе ырми-канми ĕçлемелле. Хăвăрпа çынсем кăмăллă каласаса кĕтетĕр, ачасемпе те çавăн пекех пулмаллине манмалла мар». Йывăрлăхсенчен хăраман Влас Моисеевич яланах лайăххине ĕненнĕ. Унăн ĕç пурнăçĕнче яланах çапла пулнă.



В. Моисеев тĕлĕнмелле пуян чун-чĕреллĕ, ырă кăмăллă, ĕçĕпе таса та пултаруллă, ĕмĕчĕпе малашлăха куракан, чунне парса вĕрентекен пулнă хăй вăхăтĕнче. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вĕренӳ ĕçне халалланă. Пултарулăхĕ иксĕлми пулнă.

Учитель ĕçĕ пĕрре те çăмăл мар. Пире, пулас ăрăва, ăс-тăн пама, пурнăç çулĕпе малалла илсе пыма мĕн чухлĕ тӳсĕмлĕх, вăй-хăват кирлĕ. «Тĕплĕ вĕрентетчĕ, çирĕп ыйтатчĕ», – теççĕ яланах унăн вĕренекенĕсем.

Ĕçре пултарулăхпа тăрăшулăх кăтартакан çын яланах ятлă-сумлă. Çурлатри ялĕнче пурăннă В. Моисеев та, ĕмĕр тăршшĕпе мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен педагогикăра вăй хунăскер, ĕçченлĕхне кура пысăк хисепе тивĕçнĕ.

Кăçалхи 2023 çула Чăваш Енре Телейлĕ ачалăх çулталăкĕ тесе палăртса питĕ тĕрĕс тунă тесе шухăшлатăп. Телейлĕ ачалăх çемьерен пуçланса шкула çӳреме вăхăт çитсен унăн пурнăçĕпе, интересĕсене тата тĕллевĕсене пурнăçлас ĕçе хутшăнса ачалăх сукмакĕпе телейлĕн утса-чупса, малашлăха хăюллăн ăнтăлнипе палăрса юлать те.

Улми улмуççинчен аякка ӳкмест тени тĕрĕсех. Вĕсем Антонина Кирилловна мăшăрĕпе тăватă ачине çуратса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Пĕр ачи ятарлă вăтам пĕлӳ, виççĕшĕ аслă пĕлӳ илнĕ. Çемьери икĕ ачи ашшĕ çулĕпе кайса вĕрентекенсем пулса тăнă: Нина вырăс чĕлхипе литературине, Коля историпе обществоведени предметне вĕрентнĕ. Галя ĕмĕрĕпех Мăн Сĕнтĕр районĕн «Гастроном» лавккин ертӳçинче тимленĕ. Кĕçĕнни Гена вара – тăван республикăра паллă юрист тата журналист.

Вĕренӳ ĕçĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн, ачасене пуян ăс-хакăллă пулма хăнăхтарса çитĕнтернĕшĕн В. Моисеева СССР Аслă Канашĕн «Ĕçре палăрнăшăн» медалĕпе, Чăваш АССР Министрсен Канашĕн Хисеп хучĕпе, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Вĕренӳ министерствисен Хисеп грамотисемпе чысланă. Ытти хисеп тата Тав хучĕ те сахал мар пулнă унăн.

Йывăр чире пула 1979 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче Влас Моисеевич Моисеев, Муркаш тăрăхĕн хастар та пултаруллă вĕрентекенĕ, пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă.

**Геннадий ПРАВДИН.**
**Шупашкар хули.**

**Пирĕн пата çыраççĕ**

# Çул çинче тупнă юлташ

Ялтан тухнă çĕрте, тăкăрлăкра çил хытăрах вĕрет, витĕр тухакан нӳрĕ çилĕ питех те мелсĕррĕн туйăнчĕ. Ура айĕнче çĕр каçа çунă юр нăтăртатрĕ. Кăнтăр тĕлнелле çанталăк кăшт ăшăтĕ те йĕпенсе те илĕ, мĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Çав хушăрах ман тĕлте çăмăл машина çитсе чарăнчĕ, Марина ăна яланхилле шăп та эпĕ кĕрсе лармалла меллĕн чарчĕ. Алла малалла тăсрăм та усăллă алăка лекрĕм. Салонтан тухакан ăшă варкăш сисĕнчĕ, эпĕ паллакан ырă шăрша сăмсана лекрĕ.

– Ларăр, Вячеслав, – илтĕнчĕ Маринăн усă сасси.

– Ырă ир, Анатольевна, – терĕм эпĕ.

– Ырă, ырă. Писиххипе кăкарăнма ан манăр, – стюардесса сассипе шӳтлесе каларĕ вăл.

Машина ăна итлесе çăмăллăн малалла тапранчĕ. Кивĕ асфальт тăрăх вăл машинăна пĕр тикĕс илсе пычĕ. Эпĕ малти ларкăч çинче пĕр сехет хушши киленсе пыма ĕмĕтленетĕп. Ун хыççăн пирĕн çулсем хĕресленеççĕ. Марина çул çинчи тимлĕхе çухатас мар тесе пушă сăмахпа перкелешме юратмасть. Хăйне кăсăклантаракан темăпа пĕр-икĕ ыйту парать те чылайлăха шăпланать. Эпĕ унăн йăлине пĕлнĕрен ăшă салонта шăппăн тĕлĕркелесе пытăм.

Марина хула варринче косметика лавкки тытать, кашни кунах унта ĕçе çӳрет. Вăл каланă тăрăх, ĕç хыççăн ялти усă çывлăш питех те лайăх, хуларипе танлаштарайман, самай усăллă. Машина ал айĕнче пур чухне алă километр тăршшĕ çул та ним те мар. Ку маншăн та питĕ меллĕ пулчĕ, автобус чарăнăвне çити хĕрĕх минутлă çул-йĕре утăмпа виçместĕп. Эпĕ халĕ хула çум автобусĕнче тĕркĕшсе кайнине маннăпа пĕрех ĕнтĕ.

Унпа иртнĕ кĕркунне çавăн пекех йĕпе-сапаллă, çиллĕ кунхине паллашнăччĕ. Килтен тухнă чухне çумăр çăвассăн туйăнманччĕ, чăрсăр çилĕ витĕр кастарнăн туйăннăччĕ. Çур çула çитсен питрен шултăра çумăр çапса çума пуçларĕ. Йĕпенес килмест вĕт, хăть сунчăк патне киле таврăн. Анчах та çумăртан çӳллĕрех те такам пурах пулас. Çул çинче мана илтрĕ, пулăшрĕ. Хыçра машина кăшкăртни илтĕнчĕ, эпĕ хăнăхнă пек çул айккинелле пăрăнтăм. Машина чарăнчĕ те, хĕрарăм сасси лартса кайма сĕнчĕ. Çапла вара мана Марина йĕпенесрен тата шăнса чирлессинчен çăлса хăварчĕ. Хулана çитсен автобус чарăнăвĕнче уйрăлнă чухне ларса кайнăшăн тӳлеме тесе кĕсьерен укçа кăларса тӳлеме тăтăм. Марина вара ăшă аллипе манăн алла хупларĕ:

– Вячеслав, укçана кĕсйене чиксе хур каялла. Эпĕ унщăн лартса килмен вĕт, куç курман çыннăн çулне çăмăллатас терĕм. Кирлĕ çĕрех çитерме те пултарăттăм та, каçарăр, Вячеслав, вăхăчĕ васкать, мана клиент кĕтет, – терĕ вăл.

– Мĕн эсир, Марина Анатольевна, пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Ку чарăнуран вара хам та çитетĕп, çулне пĕлетĕп, – пулчĕ хурав.

Çав вăхăтран тытăнса Марина мана хулана лартса çӳрерĕ, хирĕçлемерĕ. Маларах телефонпа шăнкăравласа пĕлтеретĕп те ĕçĕ те пулнă, тепĕр кунхине вара ăшă машина салонĕнче çула ларса тухатăп. Каялла вара автобуспа таврăнаттăм, çул хĕресленĕвĕнче юлатăп та асфальт çул тăрăх сехет майлă кирек епле çанталăкра та пĕччен утатăп. Хытăрах çултан пăрăнса каймастăп, çула çухатмастăп. Маринăна кĕтсе илме вара меллех мар, ĕçрен вăл каçхине кăна таврăнатчĕ.

Акă яланхилле ăшă салонта тĕлĕрсе, каяллахи çула тĕлленсе пыратăп. Машина такăр мар вырăнта хутран-ситрен силлесе илет, ытти чухне вара пĕр вырăнта тăнăн туйăнать. Пĕррехинче çулта тарăн шухăша кайнăччĕ, Маринăн сасси шăплăха татрĕ. Эпĕ вара кăнтăр тĕлĕнче киле таврăнасса пĕлтертĕм. Пире иккĕне те ăнăçрĕ иккен, Маринăн шухăшĕ те çаплах пулчĕ. Хăнăхнă чарăнура уйрăлтăмăр та пĕр-пĕрин патне шăнкăравлама калаçса татăлтăмăр. Çапла висĕ сехет иртрĕ. Манăн куç курмасть, автобус чарăнăвĕнче иртен-каян машинăсем хушшинчи палланă машина сассине уйăрса илме тăрăшатăп.

Унччен те пулмарĕ, мана чавсаран такам перĕнчĕ. Маринăн сасси машинăна ларма сĕнчĕ. Ăшă салонта палланă ырă шăршă туйăнчĕ. Унччен те пулмарĕ, пуçа пĕр чăрсăр шухăш пырса çапăнчĕ. Эпĕ инçех мар чечек лавкки пуррине аса илтĕм. Марина вара мана чечек суйлама пулăшма килĕшрĕ. Акă эпир унпа çавăтăнса лавккана кĕтĕмĕр. Эпĕ ăна хăйне килĕшнĕ евĕр чечек çыххи суйлама ыйтрăм. Вĕсене вăл васкамасăр суйларĕ, эпĕ чĕкессен тӳлерĕм те иккĕн урамалла тухрăмăр. Малти ларкăч çинче чечек çыххипе ларатăп, ăна калас сăмахсене шыратăп, суйлатăп. Марина вара яланхилле тимлĕскер эпĕ шухăшсемпе таçта-таçта çитнине сисрĕ, пĕлĕт çинчен çĕр çине анма сĕнчĕ. Вăл пиçиххипе çыхăнма сĕнсен кăна эпĕ тăна кĕрсе илтĕм. «Марина Анатольевна, ку кĕл чечексем сире валли. Сирĕн ырă кăмăлшăн, чун ăшшишĕн, мана пулăшнишĕн, тытсамăр», – терĕм эпĕ ун енне чечек çыххине тăсса.

Ырă кăмăлпа панă парнене вăл ырă кăмăлпа йышăнчĕ, кĕл чечеке питĕ юратнине пĕлтерчĕ. Усă кулли витĕр унăн ăшă сăн-питне туйрăм, шел, курмастăп çав эпĕ ăна. Çапла çулталăк та иртрĕ. Текех пирĕн тăрăхра Марина çук ĕнтĕ, вăл урăх хулана куçрĕ. Çапла çав вăл çыннăн шăпи, ăна хирĕç каяймăн.

Эпĕ инçе çула тухнă майăн çул айккипе туяпа шаккаса утатăп, çурăм хыçĕнче вара палланă машина сасси çывхарасса кĕтетĕп. Питех те шел, пачах та палланан машинăсем хăвăртлăха чакармасăр ирте-ирте каяççĕ, эпĕ кĕтни – çук.

**Вячеслав ПАГЕЕВ.**
**Хунтăкасси ялĕ.**

Культура

# Халăх юррин маçтăрĕсем

Муркашри Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ «Муркаш» халăх фольклор ушкăнĕ 24 çул ĕнтĕ хăйĕн пултарулăхĕпе халăха савăнтарать. Ансамбле ертсе пыракансем хăйсен тĕп тивĕçĕ тури чăвашсен юрри-ташшине халăх патне çитересси, хамăр хыççăн çамрăк ăрăва вĕрентсе хăварасси тесе шутлаççĕ. Çак ĕçе Александр Аникин, Фаина Григорьева тата Сергей Каликов пĕрле йĕркелесе пыраççĕ.

Ансамбль репертуарне çулсерен çĕнетсе пыма тăрăшаççĕ. «Муркаш» тăтăшах ытти района, республика тулашне те тухса çӳреме тăрăшать. Нумаях пулмасть регионсем хушшинче йĕркеленĕ «Несĕлсен сăвапĕ» фольклор уявĕнче пулса курчĕ. Уява Тутарстан, Пушкăрт Республикинчен, Ульяновск облаçĕнчен тата Чăваш Республикинчен пурĕ 20 ытла фольклор ушкăнĕ хутшăннă. Уяв Комсомольски тăрăхĕнче иртнĕ.

Муркашсем унта «Ай, юрлар-и, ташлар-и» музыкăпа ташă композицийĕпе халăх умне тухнă. Халăх культурин йăли-йĕркине сарнăшăн вĕсем ятарлă диплома тивĕçнĕ.



Нумаях пулмасть «Муркаш» халăх фольклор ансамблĕнче çӳрекенсем Ираида Вдовина халалланă «Ай, юрлар-и!» халăх юрисен регионсем хушшинчи конкурсĕнче те палăрчĕç. Аса илме: Ираида Вдовина (1913 – 1985) çулсенче пурăннă) чăваш халăх юрисене пухнă тата юрланă, Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Пĕлтĕрхи конкурсра «Муркаш» халăх фольклор ансамблĕн солисчĕ Людмила Мироваева конкурсăн Гран-прине çĕнсе илме пултарнăччĕ. Кăçал вара Çĕрпӳ хулинче иртнĕ конкурсăн гала-концертне Елена Галкина, Игорь Майков тата Серафима Ванюшкина хутшăнма тивĕç пулчĕç. Елена Галкина тата Игорь Майков 1 степень лауреачĕсем пулса тăчĕç, Серафима Ванюшкина – 2 степень лауреачĕ.

**Наталия НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Оринин халăх театрне йĕркеленĕренпе – 105 çул

# «Эпĕ малашне те театрта выляс шухăшлă»

– Чи малтанах спектаклĕн роле ăнланмалла, унăн характерне туймалла, режиссер спектакле мĕнле курнине шута илмелле. Çапла çеç сăнара тĕрĕс калăплама пулать тесе шутлатăп, – тет Оринин шкулĕнче вĕренекен Алина Блинова.

Вăл – Оринин халăх театрĕнче чи çамрăк артистсенчен пĕри. Унăн аппăшĕ Анастасия çак театра çӳренĕрен театр, спектакль, сцена тени уншăн та ют ах пулман.

– Тахăш çулччĕ, спектакльте хĕр ачасем çитмеççĕ тесе театра йыхравларĕç те, çавăнтанпа эпĕ унта, – тет Алина.

Малтанах вăл театрти артистсене хăнăхнă, сцена мĕн иккенне туйса илнĕ. «Вун çиччĕре çунать чĕре» спектакльте Алина Таня рольне вылянă. Хăюллă хĕр ача, унăн çемйине нимĕçсем аркатнă, вăл вара çавăншăн вăрçа кайса тавăрас тет... Çăмăл роль теме май çук, анчах Алина ăна тĕрĕс калăплама питĕ тăрăшнă. Малтанах сценари тăрăх кашни репликăна ăнланса вуланă, картинăна куç умне кăларнă, кайран вара сăмахсене вĕреннĕ.

«Çапла мана вĕренме çăмăлрах. Хама çав хĕр ача вырăнĕнче туйса илмелле, мана куракан лайăх ăнлантăр», – тет вăл.

Аппăшĕ те ăна сĕнӳсем панă, сцена çинче туйăма тĕрĕс кăтартма вĕрентсе пынă, пулăшнă.

Пĕрремĕш хут Алина спектаклĕти рольпе халăх умне Орининти Культура çуртĕнче тухнă.

– Сасă та чĕтресерех тухатчĕ, хам та хăрасарах тăраттăм, хăнăхман. Хама алла илтĕм те, йĕркеллех пулчĕ вара, – аса илчĕ вăл хăйĕн дебютне.

«Турă пӳрмен юрату» спектакльте Алина чикан хĕрне сăнласа парать. Çак халăхăн йăли-йĕрки урăхларах пулсан та, çыннăн туйăмĕсем вăл хăш халăх çынни пулнипе çыхăнманнине палăртрĕ Алина. Чикан хĕрĕ тĕп роль пулман, анчах ăна калăплама та пуçласа сцена çине тухакан хĕр ачашăн тӳрех çăмăл килмен. Чикан хĕрĕ нимрен те хăрамасть, вĕри юнлă, темĕн те туса хума пултараканскер.

Тĕрлĕ сцена çине тухса выляни ăсталăха ӳстернине палăртать Алина. Çак ĕç ăна пĕртте чăрмантарманнине калать.

– Мана театрта интереслĕ, çавăнпа та эпĕ репетицисене çӳреме вăхăт тупатăпах. Унта кайни – вăхăта ахаль ирттерни мар. Вĕренме те чăрмантармасть, – тет шкул ачи.



Хăйĕн пурнăçне Алина пачах та урăх сферăпа çыхăнтарасшăн, анчах та культурăран пăрăнасшăн маррине пĕлтерчĕ. Пурнăçра юратнă ĕç кăна мар, пушă вăхăта усăллă ирттерме чун киленĕвĕ пурри чăрмав кӳмест тесе шутлать вăл.

– Эпĕ малашне те театрта выляс шухăшлă, – терĕ çамрăк артистка.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# «Орленокра» çĕнĕ туссем тупрăмăр

Эпир, Максим Варюхин тата Ирина Цветкова, Муркаш округĕн В. Верендеев ячĕллĕ Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренетпĕр. Кăçал пире пĕтĕм Раççейри ача-пăча центрĕнче канма тӳр килчĕ. Эпир 7-мĕш сменăра пултăмăр. Вăл çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕ – утă уйăхĕн 13-мĕшĕнче пулчĕ.

Лайăх вĕреннĕшĕн тата тăван ен культурипе çитĕнӳсем туса пынă тăрăх суйлав витĕр тухрăмăр. Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ урлă лагере Шупашкартан 12 ача кайрĕ: 5 хĕр ача, 7 арçын ача. Эпир Туапсе хулине пуйăспа икĕ кун хушшинче çитрĕмĕр. Кайран «Орленока» автобуспа илсе кайрĕç. Лагерьте 21 кун хушши кантăмăр. «Орленок» лагере Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 11 – 16 çулхи ачасем пустарăннă, кашниех талантлă, маттур, пултаруллă. Çак ачасемпе хутшăнса çĕннине пĕлме пулать.

Кашни ушкăнта икĕ вожатăй, вĕсем пире пăхса тăратчĕç, илсе çӳретчĕç, виçĕ эрне хушшинче атте-анне вырăнĕнче пулчĕç. «Орленок» Хура тинĕс хĕрринче вырнаçнă, çавăнпа та тинĕсре шыва кĕме пултартăмăр.

Кашни кун тĕрлĕ ăмăрту, квест, дискотека, интереслĕ мероприятисем иртрĕç. Эпир хамăр пултарулăха пур енлĕ туптарăмăр. Ушкăнри ачасемпе пĕр шухăшлă пулса ăмăртусенче вăй виçрĕмĕр. Ташларăмăр, юрларăмăр, пĕр-пĕринпе туслашрăмăр, чăннипех те çывăх юлташсем тупрăмăр.

«Раççейĕн çамрăк турисчĕ» вĕренӳ программипе килĕшӳллĕн лагерьте темиçе хут Индюк ятлă ту çине икĕ кун хушши тăсăлакан çул çӳрев йĕркелерĕç. Ту çине пĕр кун хăпармалла, кайран тепĕр кун анмалла. Унтах çĕр выртмалла, апат пĕçерсе çимелле. Пирĕн патра тусем çук, çавăнпа пире ту çинче çӳрени кăсăклă та интереслĕ пулчĕ. Ту çинче хĕвел анăç питĕ илемлĕ. Эпир ту хыçне хĕвел анса пытаннипе килентĕмĕр. Тĕлĕнмелле хитре вырăнсенче пултăмăр. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Индюк тăвĕ çинче çапăçусем пулнă иккен.



Паттăррăн çапăçса пуç хунă салтаксене халалланă палăксем нумай кунта, вĕсем патĕнче чарăнса, хисеп туса чечексем хутăмăр.

Çул çӳрев питĕ килĕшрĕ, уçă сывлăшра çĕр каçни, пĕр-пĕринпе туслашни питĕ паха пулчĕ.

Лагерьте пулнăшăн питĕ савăнатпăр. Килтен аякра пулни, атте-анне çумра пулманни тунсăхлаттарать пулин те, «Орленок» пире вăй-хăват парнелерĕ. Пирĕншĕн чи интереслĕ те чуна тыткăнлама пултаракан вăхăт пулчĕ. Çĕнĕ туссем тупрăмăр. Вĕсемпе çыхăну тытма тĕв турăмăр. Йывăр чухне тус-юлташ алă пани пуянлăх пулнине туйса илтĕмĕр.

Лагере кайма тӳр килнĕшĕн ертӳçĕсене тав сăмахĕ калатпăр. Уйрăмах Мария Леонидовна Никитинăна, вăл пирĕнпе пуйăс çинче те пĕрле пулчĕ, лагерьте те ертсе çӳрерĕ.

Ачасем, тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнма май тупăр. Лагере канма каясси хамăртан килет.

**Максим ВАРЮХИН, Ирина ЦВЕТКОВА.**

Саламлатпăр

Юратнă та хисеплĕ çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Тамара Валентиновна ВАСИЛЬЕВĂНА** илемлĕ те сумлă юбилей ячĕпе – 65 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр.



Ачусемшĕн эсĕ – чи хаклă та юратнă çын, мăнукушăн – çепĕç кăмăллă кукам, тăванусем сана ырă кăмăллă та тарават пулнăшăн хисеплеççĕ, кӳршĕсемпе эсĕ яланах вашават, хресна ачусемшĕн вара – пулăшма хатĕр çын, ĕçтешсем сана кирлĕ сĕнӳ пама пултаракан çын пулнăран ырă сунаççĕ.

Ку кăна та мар. Çак таранччен сана çĕр-çĕр амăшĕ тав сăмахĕ каланă, мĕншĕн тесен эсĕ Муркаш район тĕп больницинче ача çуратмалли уйрăмра ĕçленĕ çулсенче çĕр-çĕр ачана çут тĕнчене килме пулăшнă, вĕсен ашшĕ-амăшĕ телей тупнинче санăн тӳпе те пур. Ĕçе эс яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă, ăста акушер пулнă. Çавăнпах Муркаш тăрăхĕнчи çынсен, ĕçтешӳсен хисепне тивĕçнĕ.

Юратнă çыннăмăр! Сана юбилей ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, вăрăм та çутă кун-çул, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Турри упраса тăтăр, кĕрекере хăвна юратакан çынсем кăна пулччăр, сан пата килекенсем яланах ырăпа пыччăр. Эпир сана юрататпăр, эс пуртан савăнатпăр, пире пулăшса пынăшăн тав тăватпăр.

**Ăшă салампа: ачисем, мăнукĕ, аппăшĕ-йăмăкĕсем çемйисемпе, çывăх тăванĕсем, хресна ачисем, кӳршисем, ĕçтешĕсем.**

Юратнă мăшăра, ырă кăмăллă аннене, хисеплĕ тăвана – Муркашра пурăнакан **Светлана Николаевна ИВАНОВĂНА** юбилей ячĕпе пур кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ – пирĕн пурнăç илемĕ, эс пуррипе пирĕн кун-çул хаваслă та телейлĕ! Кил-йыш вучахĕн ăшшине хушса пыма çăл куç шывĕ пек тапса тăракан хавхалану, çут тĕнче илемĕпе киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, вăй-хал, телей сунатпăр.



Пĕрле савăнмалăх хавас пул ялан,
Ĕçӳ ăнса пытăр, ан чактăр вăй сан.
Сана хĕвел пăхтăр савса, юратса,
Телей кăна пултăр хальхи пурнăçра.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, тăванĕсем.**

Юратнă аннене, хунямана, асаннене – Мулкачкасси ялĕнчи **Инна Марковна БЫЧКОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе тулли кăмăлпа саламлатпăр. Сывлăху чăваш юманĕ пек çирĕп, ĕмĕрӳ аслă Атăл пек анлă, утас çулу такăр пулччăр, ĕмĕтӳсем яланах пурнăçланччăр. Çĕр çинчи мĕнпур ырри,телей кӳрекенни санпа пĕр çулпа утчăр.



Нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем.**

Пирĕн юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçине – Милютакасси ялĕнче пурăнакан **Геннадий Николаевич ХЛЕБНИКОВА** çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕпрен те çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телейпе юрату, тулăх та тăнăç пурнăç сунатпăр. Ĕмĕр сукмакĕ такăр та вăрăм пултăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр.



**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисемпе мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Мăн Токшик ялĕнче çуралса ӳснĕ хаклă çыннăмăра – **Владимир Николаевич ЧУГУНОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе тата мăшăрĕпе Мария Ивановнăпа çемье çавăрни 46 çул çитнĕ ятпа чунтан-чĕререн саламлатпăр. Сывлăхăрсем юман пек çирĕп пулччăр. Ĕмĕр сукмакĕ сирĕн çутă та вăрăм пултăр. Тĕнчере мĕнпур ыррине кăна сунатпăр. Турри сире нумай çул усратăр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр, çĕр çинче мĕнпур ыррине кăна сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ачисем, тăванĕсем, тăхлачисем.**

Сывлăх страници

# Шăл врач патне каймаллине систерет

Хальхи пурнăç йĕрки çынна профилактика шучĕпе вĕçĕм стоматолог патне çÿреме май памасть. Анчах та хăш-пĕр симптомсем кая хăвармасăр медицина пулăшăвĕпе усă курмалли пирки çирĕп сигнал пулса тăраççĕ. Кун пирки «Известия» **стоматолог-терапевт Юлия Новикова** каласа панă.

Пациентсем ытларах чухне стоматолог патне шăл ыратнипе пыраççĕ. Шăл ыратни тĕрлĕрен тата пур чухне те вăйлă мар пулма пултарать. Сăмахран, çыннăн шăл пылак е йÿçĕ çинĕ чухне, шăла е пит çумне перĕнсен, пуçа пĕксен ыратма пултарать.

Врач палăртнă тăрăх, асăннă симптомсенчен кашниех патологи пурри пирки систерме тивĕç. Çавăнпа та вĕсенчен пĕрне те тимлĕх уйăрмасăр хăварма кирлĕ мар.

Пăлхантарма тивĕç тепĕр симптом – ÿт тĕсĕ улшăнни тата пит шыçни. Вăраха пыракан улшăнусем усăмлă симптомсемсĕр те пулма пултараççĕ. Чир вăйлăраххăн палăрнă чухне вара ÿт тĕсĕ улшăнать, шыçă та пулать.

Кунпа пĕрлех врач лайăх мар шăршă пурри çине тимлĕх уйăрма сĕннĕ. Çакă та шăл чирĕ пуррине систерме тивĕç. Тепĕр чухне тата ирхине вăрансан çăвар усма кансĕр е çăвар усă чухне шаклаттарни пулать. Ку вара çăвар шăммин сыппинчи проблемăсемпе çыхăннă пулма пултарать.

Стоматолог патне каймалли пирки калакан тепĕр симптом вара – шăл тасатнă чухне шăл тунинчен юн тухни.

# Диабетран асăрханма

**Эндокринолог тата диетолог Алексей Калинчев** каласа панă тăрăх, çын самăрălни пĕтĕм тĕнчипех 2-мĕш йышши диабет аталаннин сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл çавна та асăннă. 2-мĕш йышши диабет самăрăлни йывăра кайнипе аталанать. Çавăнпа та енчен те çыннăн йывăрăшĕ йĕркеллĕ пулсан, кун йышши диабет уншăн хăрушă мар.

«Кунта çакăн пек танлаштару илсе кăтартма пулать. Урампа пынă чухне пуç çине чул ÿкме пултарать тейĕпĕр. Чул ÿксесрен мĕнле асăрханмалли пирки канаш пама пулать-и-ха? Конкретлă та тĕрĕс йышăнусем тăвас пулать», – тенĕ специалист.

Пылак тата çăнăх çимĕçĕ çиме пăрахни 2-мĕш йышши диабетран çăлса хăварма пултараймасть. Тĕрремĕн утăм – йывăрăша чакарма тăрăшни. Мĕншĕн тесен çакăнпа вăл тÿрремĕнех çыхăннă. Йывăрăш йĕркеллĕ пулсан вара ку йышши диабетпа чирлес хăрушлăх çукпа пĕрех.

# Хырăм таврашĕнчи çу

Чылай чухне пилĕк тени ытларах хĕрарăмсене хумхантарать. Тухтăрсем сĕннĕ тăрăх, пилĕк пирки арçынсен те манмалла мар. Мĕншĕн тесен пилĕк калăпăшĕнчен сывлăх епле пуласси килет.

Тĕрĕссипе каласан вара пилĕк виççе тăни пуриншĕн те усăллă кăна. Хĕрарăм пилĕкĕ 85 сантиметртан иртни, арçыннăн 95-рен каçса кайни пăшăрханмалли сăлтав шутланать. Чылай чухне çакă çу çаврăнăшĕ пăсăлнине кăтартать. Хырăм тавра çу пухăнса тăни шалти органсене кирлĕ пек ĕçлеме памасть.

Çавăнпа та пылак çимĕçпе, çăкăр-булка изделийĕпе ытлашши киленме кирлĕ мар. Кĕлетке самăрăлнине вăхăтра асăрхамалла, сывлăх пирки ытларах шухăшламалла.

# Кăкăр ĕмĕртекен амăшĕн мĕнле апатланмалла?



Час-часах çемьесенче кăкăр ĕмĕртекен амăшĕн мĕнле апатланмалли пирки тавлашусем сиксе тухаççĕ. Нумай чухне амăшĕ сахалрах çиме, ытлашши килограмсенчен хăвăртрах хăтăлма тăрăшать. Теприсем вара кăкăр сĕчĕ нумайрах пултăр тесе ытларах çиме тăрăшаççĕ.

Тĕрĕссипе вара амăшне те, пепкине те лайăх пултăр тесен, кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмăн мĕнле апатланмалла-ха?

Кăкăр ĕмĕртекен амăшне вăй, пепкине вара ÿсĕм тата аталану çăл куçĕ кирлĕ. Энергипе тата тутлăхлă япаласемпе хăйне те, çуралнă ачине те туллин тивĕçтерес тесен, рациона чи малтанах усăллă çимĕç кĕртес пулать, булкăсемпе пылак çимĕç мар. Кусем вĕсем хăвăрт углеводсем кăна. Апла пулсан «иккĕншĕн» мар, «иккĕн валли» çимелле – икĕ хут нумайрах мар, икĕ хут лайăхрах. Менюра пур ушкăн çимĕçĕ те пулма тивĕç: какай, кĕрпесем, йÿçĕтнĕ сĕт продукчĕсем, пахча çимĕç, улма-çырла.

Час-часах амăшĕсем, ачан аллерги пуласран шиклензе, «шывпа çăкăр çинче ларма» тăрăшаççĕ. Çавна пĕлес пулать. Ача çуралличченех амăшĕ çиекен пур çимĕçпе те паллашма ĕлкĕрет. Кăкăр сĕчĕпе илекен кун пек çимĕç уншăн çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Çапах та çĕнĕ çимĕçсене кăкăр ĕмĕртекен амăшĕн хăйĕн менюне ерипен кĕртсе пыни кирлĕ. Пĕршер çĕнĕ çимĕç. Çав вăхăтрах çакă ача хăйне тыткаласси çинче палăрнине, ÿчĕ улшăннине е улшăнманнине сăнаса тăмалла.

Кăкăр ĕмĕртекен амăшĕн çимĕçе хăнăхнă йăлапа йышăнмалла, ытлашши çимелле мар, шыв та ĕçес килнĕ чухлĕ ĕçмелле. Çак калăпăш талăкра вăтамран 1,5 – 2 литр шайĕнче пулма тивĕç. Çитĕнсе çитнĕ кирек епле çыннăн та вăл çавăн чухлĕ пулмалла.

Çимĕç хатĕрленĕ чухне çавна манмалла мар. Витаминсем май пур таран ытларах сыхланса юлччăр. Çимĕç ытларах пĕçерни е пăспа хатĕрлени пулмалла.

Кăкăр ĕмĕртнĕ чухне начарланассин диетине тытса пырасси пирки манма тивет. Кĕлеткене «формăра» тытма вара тĕрĕс апатланни, кăштах вăй-хал активлăхĕ пулни пулăшать.

Консервантлă, искусственнăй краситель-семлĕ продуктсене, тутăна вăйлатмалли тата ытти тĕрлĕ хими хушăмĕсене рационран кăлармалла. Кирек епле алкоголь тата спирт шĕвекĕ те амăшĕн ĕçме юрамасть. Мĕншĕн тесен алкоголĕн пысăк мар дози те пĕчĕк ача организмне самай сиенлеме пултарать.

Ку е вăл витамин тата минерал комплексĕ йышăнас пулсан вара чи малтанах çемье тухтăрĕпе е педиатрпа канашласа пăхас пулать.

**Е. ЕГОРОВА,**
**общество сывлăхĕпе медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

# Çамрăклăха сыхлакан çимĕçсем

Ытларах вăхăт çамрăк та хитре юлас тесен, супермаркетсен сентри çинче хаклă çимĕç шырама кирлех мар. Хаклă пулни лайăх тенине пĕлтермест. Опытлă диетологсем шухăшланă тăрăх, рационра соуссемпе, специсемпе, тăварпа, выльăх-чĕрлĕх çăвĕсемпе пуян мар ансат çимĕç пулсан аван.

Ку вăл – витаминсемпе, минералсемпе, антиоксидантсемпе, ытти тутлăхлă япаласемпе пуян çимĕç. Шăпах вĕсем ватлăхран сыхлакан «таблетка» вырăнне пулма пултараççĕ.

Илемлĕх тата вăрăм ĕмĕр валли 7 çимĕç.

1. Кишĕр. Ăна çулталăк тăршшĕпех çиме юрать. Ученăйсем ăна хаклă минералсемпе витаминсен пуххи теççĕ. Пĕлтерĕшлисенчен пĕри – А витамин. Нутриент ÿте, çÿçе, шăла лайăхлатать. А витамин коллаген синтезне – белок тума хутшăнать. Вăл вара шăмăсен тата чĕрнесен сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

2. Хура çырла (черника). Хура кăвак тĕслĕ çак пĕчĕк çырла флавоноидсемпе тата антиоксидантсемпе питĕ пуян. Вĕсем парнелеççĕ те вăрăм ĕмĕр. Кунсăр пуçне С тата К витаминсемпе пĕрле клетка мембранисене сиенленесрен сыхлаççĕ тата çамрăклатаççĕ.

3. Миндаль. Ку мăйăрта Е витамин пур. Шăпах ĕнтĕ вăл çамрăклăхшăн тата илемшĕн кĕрешекен пулса тăрать. Унри çут çанталăкăн хăватлă антиоксиданчĕ клеткăсене регенерацилет тата иммун системине çирĕплетет. Вăрăм ĕмĕр çимĕçĕсем пирки калаçнă май, экспертсем мăйăрсен хушшинче шăпах миндале палăртаççĕ. Вăл ÿсен-тăран çăвĕсемпе, флавоноидсемпе, полинасыщеннăй мар çу кислотисемпе пуян. Вĕсенчен чи палли – омега-3.

4. Тинĕс пуллин çуллă сорчĕсем. Аш-пăш çимĕçĕ вырăнне лайăх альтернатива пулса тăраççĕ. Кун пек пулă омега-3-6-9 çу кислотисемпе пуян. Ученăйсем усăллисем шутĕнче лососе, семгана, скумбрие, сардинăна, сельде асăнаççĕ. Вĕсенчи тутлăхлă япаласене диетологсем чи малтанах шăнса чирлесрен сыхланишĕн хаклаççĕ. Çуллă тинĕс пуллинчи аминокислотасемпе антиоксидантсем ÿт, çÿç, чĕрне çине лайăх витĕм кÿреççĕ. Пуç мимин ĕçлеслĕхĕ лайăхланать, пĕркеленчĕксем пулмаççĕ.

5. Помидор. Асăннă пахча çимĕç çамрăклăх кÿрет. Ку вăл унра çамрăклăх витаминĕсем (А, Е, С) тата ликопин пулнипе çыхăннă. Ликопин çулла кăна мар, хĕлле те хăрушă пулса тăракан ультрафиолет агрессийĕнчен хÿтĕлет. Каротиноидсем сăн-пите лайăхлатаççĕ, пит çинчи пĕркеленчĕксене якатаççĕ, ÿте нÿретеççĕ, ăна йăлтăртатакан тата писĕ тăваççĕ.

6. Пăрçасем. Рационра пĕлтерĕшлĕ çимĕç шутланаççĕ. Витаминсемпе, минералсемпе, антиоксидантсемпе, белокпа пуян фасоль, пăрçа, соя, ясмăк вĕçĕм çини организмра гиалурин кислоти йĕркелет. Ку япала вăрăм ĕмĕрĕн тĕп çимĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Гиалурин кислоти ÿте писĕ тăвать.

7. Симĕс чей. Симĕс чей сывлăх, илемлĕх тата вăрăм ĕмĕр валли кирлĕ чи анлă сарăлнă напиток шутланать. Чей çулçисенчи полифенолсем кератиноцитсем туса кăларассине вăйлатаççĕ. Эпидермисăн тĕп клеткисене çапла калаççĕ. Вĕсенчи кератин ÿтĕн нÿрĕке чăтăмлă сийне йĕркелеме пулăшать. Эластинпа тата коллагенпа пĕрле вĕсем ÿт çирĕплĕхне сыхлаççĕ, вăл ватăласине вăрахлатаççĕ. Илемлĕхе тата сывлăха сыхласа хăварас тесен, кунне икĕ чашăкран кая мар симĕс чей ĕçес пулать.

**«Учительская газета»**
**сеть изданийĕ.**

# Аллергенсем тата аллерги чирĕсем



Аллергенсем – аллерги пуçаракан антигенсем. Промышленноç аллергенĕсен шучĕ çĕр ытла. Вĕсен шутне формальдегид, эпихлоргидрин, тăварсем – хромăн, никелĕн, кобальтăн, марганецăн, платинăн, çавăн пекех синтетика полимер материалĕсем, лаксен, сăмаласен, çилĕмсен, цементсен компоненчĕсем кĕреççĕ.

Ĕçлекен çын промышленноçра çут çанталăкри компонентсенчен тăракан аллергенсемпе тĕл пулать: тырă, çăнăх, табак, çĕрмамăк, çăм тусанĕ тата выльăхсен лĕкки, ÿсен-тăран шăрки. Кусем вĕсем йăлари аллергенсем пулса тăраççĕ, професси чирĕсене те аталантарма пултараççĕ.

Хальхи вăхăтра аллерги чирĕсем кĕтмен-туман ятала мар. Çакă вăл чи малтанах хамăр тавралăхри сахал мар хими факторĕсем витĕм кÿнине пула çыннăн иммун системи самай улшăннипе çыхăннă. Хальхи производство условийĕсенче ку факторсен пĕлтерĕшĕ татах ÿсет. Çак факторсем витĕм кÿрессин вăхăчĕ те, унăн интенсивлăхĕ те ÿссе пыраççĕ.

Професси аллерги чирĕн форми мĕнле пуласси аллерген организма епле майпа лекнинчен килет. Сывлав органĕсем урлă лекнĕ чухне аллерги чирĕсем сывлав органĕсен пулаççĕ, ÿт урлă лекнĕ чухне ÿт сиенленет. Çак сиенлĕ япаласем вăрах вăхăт витĕм кÿни лăймакаллă сийсен тата ÿтĕн сыхлав функцине пăсать, çапла вара професси аллерги чирĕ аталанать – ринит, синусит, риносинусит, фарингит, ринофарингит, тип пыр (бронх) астми, астма бронхичĕ, экзоген аллерги альвеоличĕ, эпидермит, дерматит, экзема тата токсикодермии. Кун йышши чирсем ытларах чухне хими промышленноçĕнче тĕл пулаççĕ (химипе фармацевтика тата хими комбиначĕсенчи аппаратчиксен), йывăç материалсем хатĕрлекен тата электрон промышленноçĕнче, строительство индустрийĕнче, полимер материалсен тата биотехнологисен производствинче, медицинăра ĕçлекенсен т. ыт. те.

Професси аллерги чирĕсене асăрхаттармалли тĕп çул вăл – ĕç зонинчи сывлăшра аллергенсен шайĕ гигиенăна тивĕçтерекен нормăра пулни, чир паллисем пулсан çийĕнчех диагностика ирттерсе сиплеве пуçлани, хăрушă лару-тăрăва лекекенсен ушкăнĕсене йĕркелени, аллергологсене тата иммунологсене хутшăнтарса медицина тĕрĕслевĕсем ирттерни, ĕç зонинчи сывлăшра аллергенсем пуррине палăртма лаборатори тĕрĕслевĕсем ирттерни.

Професси аллерги чирĕсен профилактикин эффективлăхĕ мĕнпур сыхлăх тата асăрхаттару ĕçĕсене комплекслă туса ирттернинчен килет. Вăл шутра социаллă тата экономика, санитарипе гигиена, сиплевпе профилактика мероприятийĕсене те, санитари пĕлĕвĕсем сарассин ĕçне-хĕлне те.

Сывлăхлă пулăр!

**М. АВКСЕНТЬЕВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн радиаци контролĕн тата физика факторĕсен лабораторийĕн заведующийĕ.**

Сĕнӳ-канаш

# Çу кунĕсенче те сывлăха упрамалла

Çуллахи вăхăтра сывлăх тĕлĕшпе тĕрлĕрен проблемăсем пулма пултараççĕ. Кусем вĕсем – пысăк температурăпа, хĕвелĕн интенсивлă пайăркисемпе, апатлану енĕпе тата активлăх режимĕ тĕлĕшпе улшăнусем пулнипе çыхăннисем. Халĕ вара çуллахи вăхăтри сывлăх проблемисем тата вĕсенчен мĕнле сыхланасси пирки калаçăпăр.

Çуллахи тĕп проблемăсенчен пĕри – хĕвел çинче пиçсе кайни. Хĕвел пайăркисене пула ӳт пиçсе кайма пултарать. Пиçсе кайнă вырăн хĕрелет, хăмпăланать, ыратать. Çавăнпа та, хĕвел çинче пиçсе каяс мар тесен, хĕвелтен сыхланмалли хатĕрсемпе усă курас пулать. Хӳтĕлев çи-пуçĕ тăхăнмалла, усă хĕвел çинче май пур таран сахалрах пулма тăрăшмалла.

Анлă сарăлнă татах тепĕр проблема – организм шывсăрланни. Сывлăш температури пысăк пулнипе тата ытларах тарланипе организм шĕвек хăвăрт çухатать. Çавна пула пуç ыратни, халсăрлăх, тимлĕх чакни пулать. Организм шĕвек çитменнине ан туйтăр тесен, кун каçа çителĕклĕ таран шыв ĕçес пулать. Алкогольпе кофе çинчен вара манма тивет. Мĕншĕн тесен вĕсем дегидратацие вăйлатма пултараççĕ.

Çимĕçпе наркăмăшланасси те ытларах çу кунĕсенче тĕл пулать. Шăрăх çанталăкра апат-çимĕç продукчĕсем хăвăрт пăсăлаççĕ. Ку вара организм интоксикацийĕ патне илсе çитерме пултарать. Çимĕçпе наркăмăшланас мар тесен, çимĕç хатĕрленĕ тата усранă чухне гигиена правилисене çирĕп пăхăнмалла, чĕрĕ тата пĕçерсе çитермен çимĕç çимелле мар, вĕсен усав срокĕсене пăхăнмалла.

Татах тепĕр проблема – аллерги реакцийĕсем вăйланни. Ӳсен-тăран чечеке ларни, сывлăшра чечек тусанĕн шайĕ ӳсни аллерги симптомĕсене пусăрма пултарать. Вĕсен шутĕнче сунаслани, ӳсĕрни тата кĕçĕтни. Аллерги реакцийĕсене пĕчĕклетес тĕллевпе аллергенсемпе çывăх пулассинчен асăрханма тивет. Пӳлĕмсене каçхине тата çĕрле уçăлтармалла, врач çырса панипе антигистамин препарачĕсем йышăнмалла.

Кунсăр пуçне тата çуллахи кунсенче организм ытлашши вĕриленсе кайни, вĕрипе аптăраса ӳкни те пулать. Пысăк температурăна пула организм вĕриленсе кайма пултарать. Хăрушлăхĕ çук мар, çын тăн çухатни те пулать. Çавăнпа та шăрăх çанталăкра вăй-хал активлăхне чакарма тăрăшмалла, çăмăл та натураллă пусмаран çĕленĕ çи-пуç тăхăнмалла, шыв çителĕклĕ ĕçмелле.

Ку статьяра эпĕ çу кунĕсенче сывлăх тĕлĕшпе пулма пултаракан тĕп проблемăсем çинче кăна чарăнса тăтăм. Вĕсенчен сыхланмалли тата вĕсемпе кĕрешмелли мелсене асăнтăм. Çавна та шута илме тивет. Кашни çыннăн организмĕ хăйне майлă. Çавăнпа та сывлăх тĕлĕшпе мĕнле те пулин йышăну тăвиччен врачпа е специалистпа канашласа пăхни ытлашши пулмĕ.

**Д. САМИТОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн пĕтĕмĕшле гигиена врачĕ.**

# Хĕвел çути кансĕрлет-и?

Енчен те хваттерĕн е харпăр хăйĕн пурăнмалли çурчĕн, офисăн, магазинăн чӳречисен пĕр пайĕ е пĕтĕмпех хĕвел енне тухаççĕ пулсан, çакă кун каçа хĕвел çути çителĕклĕ пулнипе, килти ӳсен-тăрана ӳсме майсем лайăх пулнипе савăнмалли сăлтав кăна мар. Çакăн пеккин негативлă витĕмĕ те çук мар:

– хĕвелĕн ялтăркка çути куçа йăмăхтарать, куçăн тĕрлĕ чирне пусарма пултарать, телепередачăсем пăхма чăрмантарать, компьютер мониторĕпе ĕçлеме кансĕрлет;

– хĕвел пайăркисенчен хӳтĕленме çутă яман жалюзи, роллет вырнаçтарма тивет, питĕ штора туянса çакмалла пулса тухать. Вĕсем вара пур чухне пӳлĕм интерьерĕпе шайлашса килĕшсе тăмаççĕ те пулма пултарать;

– хĕвел çути чылай вăхăт кĕрсе тăнипе пӳлĕмри сывлăш вĕриленсе каять. Çу кунĕсенче çакă пурăнакан çынсемшĕн, пырса çӳрекенсемшĕн, тавар туянакансемшĕн хăтлăх мар;

– вентиляци, кондиционер системисем туянса, вĕсене ĕçлеттерсе сахалах мар расхутланма лекет;

– хĕвелĕн ялтăркка çути, вăл шутра пайăркасен спектрĕн ультрафиолет пайĕ, çыннăн сывлăхĕшĕн сиенлĕ пулса тăрать. Çакă ӳт çинчи онкологи чирĕсене те пусарма пултарать. Пӳлĕмри обой, гобелен, стена çинчи картинăсем тĕсне çухатаççĕ т. ыт. те.

Çакăн пек лару-тăрăран тухмалли ансат та хаклă мар мел те пур. Чӳрече кантăкĕсем çине хĕвел çутинчен хӳтĕлекен тата ăшă яман пленка çыпăçтарас пулать. Ку пленка тĕкĕр евĕр кĕмĕл тĕслĕ те, бронза е ылтăн тĕслĕрех те пулма пултарать. Çак пленка ялтăркка çутăран та, ультрафиолет пайăркисенчен те чиперех хăтăлма май парать.

Кунсăр пуçне тĕрлĕ тĕслĕ тĕкĕр евĕр пленка материалĕпе усă курни ытлашши тăккаланмасăрах экстерьера – çуртйĕрĕн тата пӳлĕмĕн шалти сăн-сăпатне хитрелетсе хăтлăлатма та май парать. Кăнтăрла канса илме те хăтлă услови пулать. Кун пек условисенче телевизор пăхма та, компьютерпа ĕçлеме те меллĕ. Теплоизоляци пленки çыпăçтарнă кантăк хĕлле тарламасть. Ĕçлеме те, канма та хăтлăрах условисем пулаççĕ. Урамрине вара чип-чиперех курма май пулать. Çитменнине кун пек пленкăпа эсир 10 çул таранах чип-чиперех усă курма пултаратăр.

**Э. ВОЛКОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн радиаци контролĕн тата физика факторĕсен лабораторийĕн физик эксперчĕ.**

# А гепатит çулла хăрушă

Çу кунĕсенче уйрăмах А гепатитпа сиенленес хăрушлăх пысăк. Вăл ирĕклĕнех шыв, вăл шутра тинĕс шывĕ урлă та, çуман пахча çимĕçпе улма-çырла урлă та, таса мар алă урлă та сарăлма пултарать. Çавăнпах ĕнтĕ ăна «таса мар алăсен чирĕ» шутне кĕртеççĕ.

А гепатитпа ытларах чухне ачасем чирлеççĕ – 70 процент ытла. Çуралнă ачасем пĕрремĕш çулне унпа пачах чирлемеççĕ теме те пулать.

А гепатит е Боткин чирĕ – пĕверĕн шыçă чирĕ. Ăна А гепатит пусарать. Чирĕн палăрман вăхăчĕ вăтамран 14 – 35 кун тăсăлма пултарать.

Инфекцие сараканни – чирлĕ çын. Унăн чир паллисем палăрма пуçличченех вăл икĕ эрне маларах тата чир паллисем пулсан тепĕр эрне эпидемие сарма пултарать.

Хăш-пĕр çынсен, уйрăмах пĕчĕк ачасен, чир паллисем пулмаççĕ. Ытларах чухне вара температура ӳсет, çын хăйне хавшак туять, хăвăрт ывăнать, аппетит пĕтет, ăш пăтранать, хăсăк хăпарать, кăкăр шăмми айĕнче сылтăм енче канăçсăрлантарать, ӳт саралать, шăк тĕсĕ тĕксĕмленет, тула кайнă чух тĕссĕр пулать.

А гепатит çăмăл та, çавăн пекех йывăр та иртме пултарать. Йывăр иртни ытларах чух иммунитет чакнисен тата вăраха пыракан чирсемпе аптăракансен пулать. Чир пысăк сиен ан хăвартăр тесен, гепатитран вăхăтра сипленме тытăнас пулать. Çын пĕтĕмĕшпех сывалса çитсен вирус сармасть.

Инфекципе сиенленес мар тесен, профилактикăн ансат правилисене пăхăнас пулать:

– туалетра пулнă хыççăн тата обществăлла вырăнсенчен таврăнсан алăна супăньпе çумалла;

– палаткăсенче тата алăран хатĕр çимĕç туянмалла мар. Вĕсем япăх санитари условийĕсенче хатĕрленисем пулма пултараççĕ;

– усă курас умĕн пахча çимĕçе тата улма-çырлана лайăх çумалла, анчах та юхан шыв шывĕпе мар;

– кĕленчери шыв кăна тата вĕретнине кăна ĕçĕр;

– хатĕрленĕ ятарлă вырăнта кăна шыва кĕрĕр, ишнĕ чухне çăвара шыв ан çăтăр.

**Е. ЕГОРОВА,**
**общество сывлăхĕпе медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

# Усăллă çимĕç

Нимĕç пăрçи – анлă сарăлнă çимĕç. Халăхра ăна бобы тенипе пĕлеççĕ, диета пахалăхĕшĕн, пĕчĕк калоришĕн кăмăллаççĕ. Унра белок нумай, вăл çыннăн организмне кирлĕ микроэлементна пуян. Анчах та кирек епле çимĕçĕн те виçи пулмалла. Тухтăрсем пăрçа йышши культурăна пур чухне те çиме сĕнмеççĕ тата виçеллĕ кăна çиме сĕнеççĕ.

Роскачество порталĕнче экспертсем нимĕç пăрçин пахалăхĕ çинчен каласа параççĕ. Çак ӳсен-тăран вăтамран пĕр метр çӳллĕш çитĕнет, пăрçа хутаççисем 4 сантиметртан пуçласа 10 сантиметр таран пулаççĕ. Сорта кура вăл шурă, симĕс, сарă е хĕрлĕрех тĕслĕ пулать. Вăл пĕчĕк калориллĕ диета çимĕçĕ шутланать, 100 грамра 60 ккал кăна. Пĕçернĕ пăрçара энергетика пахалăхĕ пысăкрах. Ăна виçеллĕ çини кĕлеткене самăртмасть.

Çак пăрçара клетчатка, крахмал, углевод, белокпа çу нумай. Вăл калипе, кальципе, фосфорпа, магнипе, серăпа, тимĕрпе, каротинпа, çавăн пекех B, C, PP витаминсемпе пуян. Пăрçан пĕр порцинче – клетчаткăн талăкри виçин 9,5 проценчĕ, крахмал виçин 36 проценчĕ, тимĕр виçин 11,5 проценчĕ. Аш-пăш çимен çынсене нимĕç пăрçине çиме сĕнеççĕ, унра белок виçи 40 процент таран. Унăн тепĕр ырă енĕ – холестерин шайне чакарни.

Нимĕç пăрçи иммунитета çирĕплетет. Унри аскорбинка çут çанталăк антиоксиданчĕ шутланать, организма йӳçек процесĕнчен сыхлать. Марганец шайĕ пысăккипе вăл шăмăна çирĕплетет. Çак минерал организмри пĕлтерĕшлĕ ĕçсене хутшăнать.



Вăл анеми профилактикинче те лайăх. Юн сахалли гемоглобин пĕчĕккипе, эритроцит дефицичĕпе çыхăннă. Ун пек чухне çыннăн мĕнпур органĕ хавшать. Пуç мимипе чĕре те кирлĕ пек ĕçлеймеççĕ, иммунитет хавшать, вăй çукки палăрать.

Нимĕç пăрçинчи фосфор шăлсăн тăрăшать, D витаминпа кальци çакăн витĕмне вăйлатаççĕ. Апла пулсан вăл рационра пулмалла, ку пăрça ачасемшĕн те усăллă çимĕç.

# Ачасемпе тимлĕ пулăр



Ашшĕ-амăшĕ пĕчĕк ачасемпе занятисем йĕркеленĕ чухне санитарипе гигиена условийĕсем çине пысăк тимлĕх уйăрас пулать. Пӳлĕм те, сывлăш та таса пулмалла. Çуллахи кунсенче усă сывлăшра пулсан лайăхрах. Вăй-хал упражненийĕсене ирпе irttерме тăрăшмалла, апатланнă хыççăн 1 – 2 сехетрен. Кунпа пĕрлех кăнтăрлахи ыйхăран вăраннă хыççăн 1 – 2 сехетрен те ирттерме пулать.

